Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

# КАПКАН

№ 12
Декабер
1936 ҫ.

Борис Йефимӑв ӳкерчӗкӗ. „Известия" хаҫатран.




**Конституцине буржуала критиклекен хуйха-критиксем.**

„Вырăссен аслă писатĕлĕ Шчедрин хăйĕн йумах-калавĕсен пĕринче пит те кĕске ăслă тата панкав, анчах хăйне хăй ытлашши шанакан, чăрсăр бўрократ-самодур сăнарне кăтартаť. Çав бўрократ хăйне „шанса панă“ облăçĕнче, çынсене пинĕпинĕпе пĕтерсе тата хуласене вунни-вуннипе çунтарса йарса, „йĕркепе лăпкăлăх“ туса иртернĕ хыççăн, йĕри-тавра çаврăнса пăхаť те, катара Америка курах кайаť, ку çĕршыв уншăн, паллах, сахал паллă пулнă, унта темĕскерле халăха пăтратакан ирĕклĕхсем пур, патшалăха урăхла метăдсемпе тытса тăраççĕ, имĕш. Бўрократ Америка кураť те тулхăрса илет: мĕнле çĕршыв пулаť ку, ăçтан тупăннă вăлскер, на каком таком основании пурăнаť вăл? (**Пурте кулаççĕ, алă çупаççĕ**). Ăна, паллах, ăнсăртран темиçе ĕмĕр кайала уçнă, анчах ăна кайала хупма çук-им вара, унăн шăрши те ан пултăр? (**Пурте кулаççĕ**). Çапла каласа, вăл вара резоḷуци хунă: „Америка кайала хупас!“ (**Пурте кулаççĕ**).

Ман шутпа, „Дейтше Дипломатиш-Политише Корреспонденц“-ри господасем икĕ тумлам шыв пекех Шчедрин бўрокрачĕ йеверлĕ. (**Пурте кулаççĕ, ырласа алă çупаççĕ**). Вăл господасене ССР Сойузĕ тахçанах ĕнтĕ куçĕсене хăрпăк кўртнĕ. Вунтăхăр çул хушши ССР Сойузĕ майак пек тăраť, пĕтĕм тĕнчери рабочи класа ирĕке тухма çулăмлантараť, рабочи класăн тăшманĕсене уртараť. Çитменне вăл, çав ССР Сойузĕ, просто пурăнаť кăна мар, ўсет те иккен, ўсет кăна мар, ĕлкĕрсе пыраť иккен, ĕлкĕрсе пыраť кăна мар, çĕнĕ Конституци пройектне те тăваť иккен, çав пройект çынсен ăспуçĕсене тапратаť, пусмăрти классене çĕнĕ шанчăк параť. (**Алă çупаççĕ**). Кун хыççăн Германи официозĕнчи господасен йепле тулхăрас мар-ха? Мĕнле çĕр шыв пулаť ку,—тесе çухăраççĕ вĕсем,—на каком таком основании пурăнаť вăл? (**пурте кулаççĕ**), ăна 1917-мĕш çулăн октăберĕнче уçнă пулсан, мĕн тума ăна кайала хупма йурамасť, унăн шăрши те ан йултăр? Çапла каласа, вĕсем йышăнаççĕ: ССР Сойузне кайала хупас, пурте илтмеле—ССР Сойузĕн патшалăхĕ çук вăл тесе, ССР Сойузĕ географилĕ простой ăнлавран пусне урăх нимĕн те мар, тесе пĕлтерес! (**Пурте кулаççĕ**).

Америка кайала хупас тесе резоḷуци хунă чух, Шчедрин бўрокрачĕ темле панкав пулин те, çапах хăйĕнче хăй кăштах ăс тупнă; вăл хăй ăшĕнче акă мĕн каласа илнĕ: „Анчах ку манран килмест пулас-ха“,—тенĕ. (**Хавассăн шавласа кулаççĕ, тăвăллăн алă çупаççĕ**). Пĕлместĕп, Германи официозĕнчи господасен тавçарса илме ăсĕ çитейĕ-и: хут çинче вĕсем пĕр-пĕр патшалăха „хупма“, паллах, пултараççĕ, анчах тивĕçлипе калас пулсан, „ку вĕсенчен килмест“... (**Хавассăн шавласа кулаççĕ, тăвăллăн алă çупаççĕ**).

(**И. В. СТАЛИН,**—ССР Сойузĕн Конституци пройекчĕ çинчен тунă докладран).

**М. Е. САЛТЫКОВ-ШЧЕДРИН**

# Пĕр шухă начаḷник хăйĕн ĕçĕсемпе хăйне хăй тĕлĕнтерсе йани çинчен калакан йумах

*(Сыпăк)*

Пурăннă, теť, тахăш çĕршывра, тахăш патшалăхра пĕр шухă начаḷник. Пуласса ĕнтĕ ку тахçанах, ĕлĕкех, начаḷствă таврашĕсем йертсе пырас ĕçре икĕ тĕрлĕ правилă йышăнса хунă чухнех пулнă, теť. Пĕрремĕш правили çапла пулнă, теť: начаḷник мĕн чухлĕ сийен кўрет, тăван çĕршывне çавăн чухлĕ усă кўрет. Ăслăлăхсене прахăçлаť пулсан — усă кўрет; хулана вут тĕртсе çунтарса йараť пулсан—усă; халăха харатма пултарчĕ пулсан вара т-тах та усăллă; ах. Кунта вĕсем çакна шута илнĕ пулаť ĕнтĕ, тăван çĕршыв унчченхи начаḷствă аллинчен çĕнĕ начаḷствă аллине йалан йапăхланса куçса пыраť, апла пулсан вăл, ан тив, сийен кура-кура пусăрăнтăр, бунтсенчен писерех патăр, кайарахран вара, сывлăш çавăрса илтĕр те чăн-чăннипех чечекленме пуçлатăр, тесе шухăшланă пулаť ĕнтĕ вĕсем. Иккĕмĕш правили вара, çапла пулнă, теť: ĕçлĕ вырăнсене мĕн май пур таранах пўтсĕр çынсене пухса лартмала, мĕншĕн тесен обывателсем хăйсен ĕçĕсемпе аппаланаççĕ, а пўтсĕр çынсем—ирĕклĕ çынсем, çитменне тата вĕсем сийен тума та пултарарах параççĕ.

Шухă начаḷник çакăнта асăннисене пурне те сăмси çинех картса хунă, паллах ĕнтĕ, вăл шухă иккенне пурте пĕлсе танăран, ăна нумай кĕттерсе

тӑман, унӑн аллине часах пӗр край шанса панӑ. Пит аван. Вӗҫтерет вӑл хайхи крайа, ҫула май йалан тӗлӗксем курса пырать, ҫитменне тӗлӗкӗсем куҫ кӗретех курӑнаҫҫӗ. Акӑ вӑл чӑн малтан пӗр хулине вут тӗртсе ҫунтарса йарать, унтан теприне ҫунтарма тытӑнать, хулана пӗр чулӗ йулми пӗтерсе хурать—кӑна вӑл, пӗтӗмпех, хӑйне шанса панӑ крайа ытларан та ытларах усӑ кӳресшӗн тӑвать. Ак ӗнтӗ вӑл, кашни хулана ҫунтармассеренех, куҫулне тӑкать, йӗре-йӗре хурланать: мана мӗн тери йавӑррине турӑ курать! тесе йӗрет. Ҫапла майпа пӗрер ҫул, тепрер ҫул ҫунтаркалать ҫунтаркалать те,—куран ав, хайхи шанса панӑ край йерипен те майӗпен пусӑрӑна та пуҫланӑ. Пусӑрӑнать-пусӑрӑнать—сасартӑк, катӑргӑ! Ҫук, ку катӑргӑ леш Ҫӗпӗрти катӑргӑ пекки мар, ку савӑнӑҫлӑ та хаваслӑ катӑргӑ, кунта ҫыннисем те хӑйсен ирӗкӗпех, ҫак катӑргӑ тӗлӗшне кӑларнӑ саккунсен хӳтлӗхӗнче ырӑ пурнӑҫпа киллексе кӑна пурӑнаҫҫӗ. Ахаљ чухне ӗҫ ӗҫлеҫҫӗ, праҫниксенче йурӑсем йурлаҫҫӗ, хӑйсен начаљникӗсемшӗн турра кӗл тӑваҫҫӗ. Ӑслӑлӑхсем ҫук, анчах обывателсем пурте, хаљ тесен хаљ екзаменӑ тӑма хатӗр; ерех ӗҫмеҫҫӗ, анчах ӗҫкӗ тупӑшӗ ӳснӗҫемӗн ӳссе пырать; чикӗ тулашӗнчен тавар тавраш кӳмеҫҫӗ, анчах таможњасенче пошлинӑсем килсех тӑраҫҫӗ. Вӑл пӑхса, савӑнса ҫеҫ тӑрать: хӗрарӑмсене пӗрер тутӑр парать, мужиксене—пӗрер хӑмач пиҫиххийӗ. „Вӑт мӗнле ман катӑргӑ!—тет вӑл савӑнӑҫпа ҫиҫсе тӑракан обывателсене:—ак мӗншӗн епӗ хуласене вут тӗрте-тӗрте йатӑм, ак мӗншӗн халӑха хӗратрӑм, ӑслӑлӑхсене пӑрахӑҫласа пӗтертӗм. Хаљ ӑнлантӑр-и ӗнтӗ!“

— „Мӗнле ӑнланас мар—ӑнланатпӑр“.

Пырса ҫитрӗ те вӑл хӑй вырӑнне, пуҫларӗ сийенлеме. Пӗр ҫул сийенлет, икӗ ҫул сийенлет. Халӑха апат-ҫимӗҫ тӑратас ӗҫе—чарса лартрӗ, халӑх сывлӑхне упрас ӗҫе—пӗтерсе хучӗ, ӑслӑлӑхсене ҫунтарса йачӗ те кӗлне ҫилпе вӗҫтерсе йачӗ. Виҫҫӗмӗш ҫул ҫине кайсан тин вӑл хӑй тунӑ пек ӗҫсем ҫине ҫавӑрӑнса пӑхрӗ: чип-чипер, йӗркеллех пулсан ӗнтӗ, шанса панӑ крайӑн чечекленме те пуҫламала, анчах вӑл пусӑрӑнма та пуҫлайман иккен...

Шухӑша карӗ шухӑ начаљник, пуҫларӗ шырама сӑлтавне: мӗн сӑлтавпа капла пулса пычӗ-ха ку?

Шухӑшларӗ, шухӑшларӗ те сасартӑк ӑна ҫутӑ пайӑркийӗ ҫутатса йанӑ пекех пулчӗ. „Шухӑшласа тӑни“—акӑ мӗн иккен сӑлтавӗ! Пуҫларӗ вӑл пулса иртнӗ ӗҫсене аса илме, мӗн чухлӗ ытларах аса илет, ҫавӑн чухлӗ ытларах унӑн шухӑшӗ те ҫирӗпленсех пырать, темӗн чухлӗ сийен турӑм пулин те, чӑн-чӑн сийен тӑваси патне, пурне те пӗр труках хӗстерсе хуракан сийен тӑваси патне, пурӗ-пӗрех ҫитеймерӗм, тет вӑл. „Ҫитессине ӗнтӗ, ҫав „шухӑшласа тӑни“ чӑрмантарса тӑнӑ пиркийех ҫитеймерӗм. Миҫе хутчен ӗнтӗ вӑл: пырат мӗн пур вӑйӗпе чупса, аллисемпе хӑлаҫланса илет, кӑшкӑрса йарать, „ишсе антаратӑп!“ тет,—унччен те пулмарӗ, „шухӑшласа илет: мӗнле-ха есӗ, тӑванӑм, ытла тӑмсай!—а хӑй ҫавӑнтах махӑ парать. „Шухӑшласа тӑрас“ йӑла пулас мар пулсан вӑл...

— Тахҫанах сывлӑш ҫавӑрса илнӗ пулӑттӑр есӗр ман алӑра!—кӑшкӑрса йачӗ вӑл темскерле йут сасӑпа, ҫакна чухласа илсен:—пӑхӑттӑмччӗ епӗ есӗр ман алӑра мӗнле...

Ҫапла каларӗ те чышкипе тӗнче уҫлӑхнеле йунаса илчӗ, йунаса илнипе те пулин хӑйӗн крайне усӑ кӳрес шухӑшпа.

Унӑн телейне пула, ку хулара пӗр хӗрарӑм тухатмӑш пурӑннӑ пулнӑ, вӑл ҫӑра кофӗ ҫине пӑхса малашне мӗн-мӗн пуласса чухласа илме пӗлнӗ, ҫав хушӑрах тата ҫынӑн „шухӑшласа тӑрас“ йӑлине те туртса илме пултарнӑ. Чупса пырать те вӑл ун патне: туртса ил! тет. Курать леш, ӗҫе васкавлӑн тумала иккен, йӑпӑр-йапар унӑн пуҫне хыпашлакаласа пӑхать те пӗр шӑтӑк тупса пӗчӗкҫеҫ клаппӑнне уҫать хурать. Сасартӑк шӑтӑкран темскер, ши! шӑхӑрнӑ сасӑ илтӗнсе карӗ те—шабаш! Пирӗн йекӗт „шухӑшласа тӑрас“ йӑласӑрах тӑрса йулчӗ.

Паллах ӗнтӗ, ҫав тери савӑнать. Ахӑлтатса кулать.

Чупса пырать вӑл чӑн малтан ӗҫлӗ вырӑна. Пӳлӗм варрине тӑрать те сийен тума шухӑшлать. Тӑвассине тӑвасшӑн ӗнтӗ вӑл, анчах мӗнле сийен тӑвассине, тата ӑна мӗнле пуҫарса йарассине—ӑнланаймасть. Куҫӗсене чаркалать, тутисене выљаткалать—урӑх нимӗн те тӑваймасть. Ҫапах та, пӗр ҫапла хӑтланнипех, вӑл пурне те хӑратса пӑрахать, унӑн ӑссӑр сӑн-питне курнипех, пурте пӗр харӑс тарса пӗтеҫҫӗ. Вара вӑл чышкипе сӗтеле ҫапса ҫӗмӗрет те йулашкинчен хӑй те тухса тара парать.

Чупса ҫитет хире. Курать, ҫынсем суха сухалаҫҫӗ,—утӑ ҫулаҫҫӗ, кӗреплесемпе утӑ тураҫҫӗ. Пӗлет вӑл, унӑн ку ҫынсене рудниксене катӑргӑна йамала, анчах мӗншӗн йамалине, мӗнле майпа йамалине—нийепле те ӑнланаймасть. Куҫӗсене чарса пӑрахать те пӗр сухаҫӑнне суха пуҫне туртса илсе ҫапса аркатать, анчах теприн патне, сӳрине ҫапса салатас тесе, ыткӑннӑччӗ ҫеҫ вӑл, сасартӑк пурте хӑраса ӳкеҫҫӗ, хир пӗр самантрах пушанать йулать. Вара вӑл хаљ ҫеҫ купаласа хунӑ утӑ купине айӑн-ҫийӗн ҫаварса салатса тӑкать те кайала тара парать.

Тавӑрӑнать хулана. Пӗлет вӑл, унӑн ӑна тӑватӑ кӗтесрен вут тӗрте-тӗрте ҫунтарса йамала, анчах мӗншӗн апла тумалине, мӗнле майпа тумалине—ӑнланаймасть. Кӑларать вӑл кӑсийинчен шӑрпӑк курупки, сӗрет те сӗрет шӑрпӑка, анчах чӗрӗлекен пуҫӗпе мар, йалан тепӗр пуҫӗпе сӗрет. Чупса хӑпарать вӑл чиркӳ тӑррине, пуҫлать чан ҫапса халӑха йыхӑрма. Ҫапать пӗр сехет, икӗ сехет ҫапать, анчах мӗншӗнне—ӑнланаймасть. Ҫак хушӑра халӑхӗ пухӑнма ӗлкӗрнӗ те: ӑҫта пачӑшкӑ, ӑҫта?—тесе ыйтать. Йулашкинчен вӑл, чан ҫапса ывӑнать те, чиркӳ тӑрринчен чупса анса кӗсйинчи шӑрпӑк курупкине кӑларать, пур шӑрпӑкне те харӑс чӗртсе йарать, хаљ кӑна халӑх хушшинеле ыткӑнчӗ, пурте айаккала пӗрхӗне-пӗрхӗне тарса пӗтеҫҫӗ, вӑл каллех, тӑр пӗчченех тӑрса йулать. Вара, нимӗн тума ҫуккине кура, килне вӗҫтерсе ҫитет те ҫӑрапа питӗрӗнсе ларать.

Ларать пӗр кун, икӗ кун ларать. Ҫапла ларнӑ вӑхӑтра ун пуҫне каллех „шухӑшласа тӑрас“ йӑла пухӑнса пыма пуҫлать, анчах вӑл ун патне вӑрттӑн йӑпшӑнса пырса ачашланас вырӑнне, ҫав-ҫавах, кивӗ йурра йурлать: мӗнле-ха есӗ, тӑванӑм, ытла тӑмсай! Вӑл, паллах ӗнтӗ, ҫакна илтет те ҫиленсе хурать. Пуҫӗнчи шӑтӑкне хыпашласа тупать те (йурать вӑл хӑш тӗлтине пӗлет) пӗчӗкҫеҫ клаппӑнне кӑшт ҫӳлеле ҫӗклет, шӑтӑкран ши!

шăхăрнă сасă илтĕнет те—вăл каллех „шухăшласа тăрас“ йăласăр тăрса йулаŤ.

Вăл çапла ларнă вăхăтра, чипер шухăшлас-тăк, обывателсен сывлăш çавăрса илмеле пек ĕнтĕ, анчах вĕсем, ун вырăнне, хăраса ÿкнĕ. Ăнланайман, еппин. Ку таринччен сийен тени йалан шухăшласа тăрас йăлапа пулса пыраŤчĕ, пурте унран сехетсеренех усă пуласса кĕтсе тăраŤчĕç. Халъхалъ ăна пула усă пула пуçланăччĕ, кĕçех шухăшласа тăрас йăла çукран сийен пулма пуçларĕ, мĕн кĕтмеле ĕнтĕ унран—паллă мар. Çапла ĕнтĕ, хăраса ÿкрĕç пурте. Ĕçлеме пăрахрĕç, шăтăксене тара-тара пытанчĕç, азбукăна манчĕç, ларнă та—лараççĕ кĕтсе.

Анчах вăл шухăшласа тăрас йăласăрах лараŤ пулин те, ăнланса илет, унăн шухăшласа илме пĕлменнине палăртакан сăн-пичех хăй ĕçне пит аван тума пултарнă иккен. Обывателсем шăтăксене тара-тара пытанни те тем пекех ĕнтĕ; апла пулсан, кăштах пусăрăнас кăмăлĕ пур вĕсен. Ытти тĕрлĕ ĕçсем те йатнех шайлашса пычĕç: хирсем типе-типе хытса ларчĕç, йухан шывсене хăйăр çуса ăшăхлатса хучĕ, кĕтÿсенчи выльăх-чĕрлĕхсене çĕпĕр йазви тапăна пуçларĕ. Пĕр сăмахпа каласан, пурте, обывателсен шухăш-кăмăлне вăратмала пулса пычĕ... Самай халъ ĕнтĕ катăргă тăвас ĕçе тытăнмала. Анчах кампа тăвас-ха ăна? Обывателсем пытана-пытана пĕтнĕ, елекçĕсемпе пÿтсĕр çынсем кăна, хĕвел ăшшинчи ÿпресем йевĕрех, кĕтĕвĕ-кĕтĕвĕпе вăйă выльаççĕ. Вĕт пĕр пÿтсĕр çынсемпе кăна катăргă тума та май çук. Катăргă тума ĕçсĕр çапкаланса çÿреме йуратакан елекçĕ мар вĕт-ха, чăн-чăн ĕçчен, лăпкă обывател кирлĕ.

ПуçлаŤ вăл обывателсен шăтăкĕсене кĕре-кĕре хускатма, пĕрерĕн-пĕрерĕн турта-турта кăлараŤ вăл вĕсене шăтăкĕсенчен. Туртса кăлараŤ те пĕрне—тĕлĕнтерсе йараŤ; туртса кăлараŤ тепĕрне—ăна та тĕлĕнтерсе йараŤ. Анчах чи хĕрĕнчи шăтăкĕ патне çитсе те ĕлкĕреймест—пăхаŤ, паçăрхисем каллех шăтăкĕсене шăвăна-шăвăна кĕме ĕлкĕрнĕ те... Çук, апла, еппин вăл чăн-чăн сийен тăвасси патне çитеймен-ха!

Вара вăл „пÿтсĕррисене“ пухаŤ те çапла каласа хураŤ:

„Çырăр, пÿтсĕрсем, донос“.

Савăнчĕç пÿтсĕрсем. Кама хуйхă, анчах вĕсемшĕн пулсан савăнăç. Çавăрăнаççĕ кăлтăрмачла, ун-кун кускаласа çÿреççĕ, выльаççĕ кăна, вĕсем патĕнче иртен пуçласа каçченех ĕçкĕ-çикĕ. Доноссем çыраççĕ, сийенлĕ пройектсем шухăшла-шухăшла кăлараççĕ, крайа сыватасшăн хыпкаланаççĕ... Çаксем ĕнтĕ пĕтĕмпех, мĕн пур хугла пĕлнĕ-пĕлмен шăршланса кайнă йапаласем пурте шухă начальник кабинетне шăвăна-шăвăна пыраççĕ. Вăл пур, вулаŤ-вулаŤ, анчах нимĕн те ăнланаймасŤ. „Каçсерен парappан çапа-çапа, обывателсене кĕтмен çĕртен ыйăхран вăратмала“—анчах мĕншĕн? „Обывателсене ытлашши апат-çимĕç çиме чарарах памала“—анчах мĕн сăлтавпа? „Америке кайала хупас“—анчах ку вара, манран килмест пулас? Пĕр сăмахпа каласан, лакса ларичченех вуларĕ, анчах пĕр резольуци те хума пултараймарĕ.

Начальник пĕр шухăшламасăр-тумасăрах резольуцисем çырса тултараŤ пулсан вара, çавăн пек начальник пурăнакан хулана хуйхă, анчах начальник нимĕнле резольуци те хума пултараймасŤ пулсан вара, пушшех пысăк хуйхă.

ПухаŤ те вăл тепĕр хут пÿтсĕрсене, çапла каласа хураŤ:

— Калăр, пÿтсĕрсем, мĕн тунинче сирĕн шухăшăрпа, чăн-чăн сийен?

Тавăрса каларĕç ăна хирĕç „пÿтсĕрсем“ пурте пĕр сасăпа:

— Пирĕн шухăшпа, хăçан та хăçан пирĕн программăн мĕн пур пек пайĕсем пурнăçа кĕреççĕ, çавăн чухне тин чăн-чăн сийĕн пулма пултараŤ, унсăрăн пулайрас çук. Программи пирĕн акă мĕнле. Епĕр, пÿтсĕрсем, калаçар, анчах ыттисем сăмах та ан чĕнччĕр. Пирĕн, пÿтсĕрсен, шухăш-кăмăлĕсемпе сĕнĕвĕсене çинчех йышăнмала пултăр, ыттисен сĕнĕвĕсене пăхса тухмасăрах вырттармала. Пире, пÿтсĕрсене, пурăнма кăмăллă пултăр, анчах ыттисене пурне те çава тĕпне. Пире, пÿтсĕрсене, чаплă çĕрте, ачашласа усраччăр, анчах ыттисене пурне те тимĕр сăнчăрпа сăнчăрласа усрамала пултăр. Епĕр, пÿтсĕрсем, сийен тунине усă кÿни хисепне картса хуччăр, анчах ыттисене пурте, усă кÿрес-тăвас пулсан та, вĕсем усă кÿниве сийен кÿни вырăнне шутлаччăр. Пирĕн çинчен, пÿтсĕрсем çинчен, никам та сăмах чĕнме ан хăйтăр, анчах епĕр, пÿтсĕрсем, кам çинчен мĕн калас тетпĕр, çавна калама, вĕсем çине йытăла вĕрме пултарар. Вăт ĕнтĕ, çаксене пĕтĕмĕшпех, пĕр сиктермесĕр пурнăçа кĕртсен вара, чăн-чăн сийен те пулса тăраŤ.

Вĕçне çитиччĕнех итлерĕ вăл çак пÿтсĕрсен сăмаххисене, вĕсен сĕмсĕрлĕхĕ ăна ытла килĕшсех каймарĕ пулин те, çапах та, кураŤ вăл, ку çынсем, кирек мĕнле пулсан та, тĕрĕс çул çинче тăраççĕ,—нимĕн тума та çук, килĕшрĕ.

— Йурĕ,—тет:—йышăнатăп сирĕн программăна, хоспода пÿтсĕрсем. Ман шухăшпа, унран самайах сийен пулма пултарассăн туйăнаŤ, анчах вăл сийен, хама шанса панă крайа чечекленсе йешĕрме, çителĕклĕ пулĕ-ши—кăна халлĕхе асанне иккĕле калаŤ.

ХушаŤ вăл пÿтсĕрсен сăмаххисене хăмасем çине çыра-çыра хума, мĕн пур халăх пĕлсе тăмала пултăр тесе, хăмисене плошчăде кăлара-кăлара çакма хушаŤ, анчах хăй, чÿрече умне пыраŤ те мĕн пуласса кĕтсе тăраŤ. Пĕр уйăх кĕтет, тепĕр уйăх; кураŤ: ĕрĕхтерсе çÿреççĕ пÿтсĕрсем, кирлĕ-кирлĕ мар сăмахсемпе перкелешеççĕ, çаратаççĕ, пĕр-пĕрине карланкăран тыта-тыта ласкаççĕ, анчах шанса панă край çаплах, пурĕ-пĕрех „нийепле те чечекленсе йешĕреймест“. Кунпа çеç çитмест-ха: обывателсем шăтăксене шаларан та шаларах кĕре-кĕре ларнă, нийепле кăларма çук вĕсене унтан. Те чĕрĕ, те вилĕ—сасă та памаççĕ.

Алакĕр Васлейĕ куçарнă.

Çак „йумаха“ вулакан çын, йумахри ĕçсем хăш вăхăтра пулса иртнине йăпăр-йапăрах чухласа илеймесĕр пăтрашса кайма та пултарĕ. Хăçан пулнă вăл ĕçсем? Ĕлĕк-авал-и? Халь-и? Анчах шухăшларах вуласан, епĕр ку йумахри ĕçсем чăн-чăннипех фашисла Германире пайанхи кун пулса иртекен ĕçсенчен нимĕн те уйрăм маррине уççăнах курса тăратпăр. Вичкĕн куçлă автăр ку йумаха тахçанах, Германире фашиссен диктатури пуç пулса тăриччен чылай маларах çырнă.



— Астăватăн-и — сталинла Конституцийе радиопа итленĕ чухне, музăкă сасси илтĕннĕн туйăнчĕ.
— Илтĕнчĕ ҫав, илтĕнчĕ! Пулас коммунисăмăн чаплă музăкĕ илтĕнчĕ.



# Германи

*(Кӗске очӗрк)*

Германи тесе Вăтам Йевропăри „мана кунта тăвăр“ тесе хирӗнме йуратакан, фашисăм бацилипе чирленӗ патшалăха калатпăр. Хирӗннӗ чухне вăл патшалăх пуринчен ытларах хӗвелтухăçӗпе (Совет Сойузӗ) хӗвеланăç тата ытти йенӗсене пăхса хирӗлет.

Германире çак йатлă мăн шывсем йухаççӗ: Дунай, Рейн, Емс, Везер, Елъбă, Одер, Вислă, Преголъ тата ытти те. Тата ку шывсемсӗр пуçне ӗçсыннисен куççулӗпе йунӗ мăн çырмасен шывӗ пекех йухаççӗ.

Германире пурăнакан халăхсем çаксем пулаççӗ: фашиссем тата выççисем. Фашиссем çӗлен-калта ăраттинчен, выççисем — ӗççыннисен ăраттинчен.

Пӗтӗм территорин 27 проценчӗ çинче вăрмансем ӳсеççӗ, 11 çурă проценчӗ çинче çаран курăксем, 1 проценчӗ çинче сатсем ӳсеççӗ. Пуринчен те вăйлăн та хăватлăн халăх нушалăхӗ ӳсет тата фашисăм йӗркине курайманлăх ӳсет.

Фашиссем расă теорипе витӗнсе çӳреççӗ. Расă теорине пӗлме национал-социалиссен программин 4-мӗш параграфне пăхмала. Унта „кам ăшӗнче нимӗç йунӗ пур, çав çеç Германи гражданинӗ пулма пултарат“, тенӗ. Программăн 5-мӗш параграфӗнче ыттисене (нимӗç йунӗ çуккисене) йутран килнисем вырăнне хурса урăх саккунпа тытса тăмали çинчен каланă. Ыттисене çавăнпа хӗсӗрлесе усраççӗ, сăмахран, йеврейсене тӗрлӗ хуласенчен, обшчӗствă организацисенчен хăвала-хăвала йараççӗ, хӗнеççӗ. Хӗненине тӳсейменнипе кăшкăрсан „за нарушение тишины и порядка“ тесе арӗслеççӗ. Йеврейсем нимӗçсем пек мар, халăх пухăнакан вырăнсене пыма пултараймаççӗ. Çавăнпа та пӗр журналра: халăх çӳрекен уборнăйсемпе те чăн ари ăрăвӗвчен тухнă нимӗç çыннисем кăна усă курма пултараççӗ, тесе çырнăччӗ.

Берлинри пӗр хаçатра çакăн йышши пӗлтерӳ тухнă: „Есӗр чăн-чăн нимӗç пулсан, нимӗç çынни мар тунă соçискăсене çиме пултараймастăр. Апла пулсан, соçискă çиме пирӗн (çавăнта-çавăнта ларакан) ресторана пырăр“, тенӗ. Çапла ӗнтӗ Берлинра соçискăсене те идеологилӗ нагрузкă панă, вӗсен те чăн-чăн ари йăхӗнчен тухнисен хырăмӗсене çеç кӗмеле.

Расăна лайăхлатас теори çинчен кӗнекесем сахал мар çырнипе палла тухнă Конги профессăр Германири тухтăрсен сиесӗнче çапла каланă:

— „Нумайӗшӗ медицинăра та расă принципӗ пулмалине манса кайаççӗ. Хăшӗсем чирлӗ çынни нимӗç-и, китайцă-и, негр-и — камне-мӗнне пăхмасăр сиплӗх парса йараççӗ. Ун пеккисемпе епӗр килӗшме нийепле те пултараймастпăр“, тенӗ.

Çапла ӗнтӗ, нимӗç йунӗ фашиссемшӗн çав тери паха пулсан, пирӗн шухăшпа фашист пӗр-пӗр нимӗç çыннин тумтирӗ çинче хăнкăла çӳренине курсан, хăнкăла хуçине çапла калассăн туйăнат:

— Тусăм, тумтирӳ çинче авă пӗр хăнкăла уçăлса çӳрет. Ан вӗлер ес ăна, мӗншӗн тесен вăл чӗрчун ăшӗнче чăн чăн ари йăхӗн йунӗ чупат. Тыт та ăна, чи лайăх клеткă ăшне хупса хур, шыв пар, çитер, тумлантар... Камра ари йунӗ йухат, вăл ыттисенчен лайăхрах пурăнма тивӗçлӗ.

Фаунă йе, тепӗр майлă, чӗрчунсен тӗнчи çинчен каласан... Германи çӗршывӗн килсенче усракан выљăх-чӗрлӗх буржуйсене çиме вӗсен сӗтели çине кайса пырат, тискер кайăксем — фашиссен организацийӗсенче тăраççӗ.

Германире слонсем, арăслансем, страуссем çук. Асăннă чӗрчунсем унти зверинцăсенче те пурăнма хăраççӗ, мӗншӗн тесен вӗсем пурӗш те ари йăхӗнчен тухнăскерсем мар: слон сăмси, нимӗç çынни пек мар, çеклӗ йевӗр, арăсланăн — çуçӗ кăтра, кăтра çӳçлӗ çынна Германире „çемит“ тесе хӗсӗрлеççӗ.

Килти выљăх-чӗрлӗхсем (мăйракалă шултăра выљăх, сурăх, качака, сысна, кайăк-кӗшӗк) фашисăм режимне тӳсеймесӗр ӗрчейми пулнă. Фашиссен пичет оргăнӗсем темӗн чухлӗ „ӗрчӗр!“ тесен те ӗрчемеççӗ, çавăнпа та мăйракалă шултăра выљăх шучӗ çулталăк хушшинче мӗлйун, сысна—2 мӗлйун пуç чакни çинчен унти хаçатсемех пӗлтереççӗ.

„Цайтунгсдинт райхснерштендес“ хаçат пӗлтернӗ тăрăх, Германи патшалăхӗн продовољстви министăрӗ парти, патшалăх, çар представителӗсене пухса, Берлинри „Кайзергоф“ йатлă ресторанра кит какайӗ апатне çитерсе пăхтарнă. Никам халиччен çимен кит какайне, шăршлăскерне, асăннă представителсем ырăланă кăна мар, малала халăха унпа тăрантарсан аван пулат, тесе авторитетлă решени йышăнса хăварнă. Анчах кунта пирӗн çакна калас килет: фашиссем çимели йапаласене çемит йăхӗпе сыхăну тытса курнисене те тиркесех каймаççӗ курăнат! Ак китах илес. Библи каланă тăрăх, кит Иов йатлă йеврейе хăйӗн хырăмӗнче паспăртсăрах виçӗ кун хушши усранă. Мӗнле çав ари йăхӗнчен мар, çемит йăхӗнчен тухнă çынна хăй хырăмӗнче виçӗ кун усранă кита çиме йӗрӗнмен çав расă теорине сирӗп тытса тăракан фашиссем. Аш çук пулсан,

шўрпи те пырĕ, тенĕ авал чăвашсем; выљăх ашĕ çук пулсан, кит ашĕ те пырĕ, теççĕ пайанхи Германин продовољстви министăрĕпе пропагандă министăрĕ фашисăм пурăти айĕнчи çĕршыв çыннисене.

Çын, тепĕр тесен, аш çимесĕрех пурăнма пултарать-çке. Гитлĕр нимĕç çыннисене аш вырăнне кирлĕ таранах сывлăш, хĕвел, шыв.. патак пама пултарать. Сĕт-çу вырăнне, Гитлĕрĕн „Манăн кĕрешӳ“ („Мейн кампф“) кĕнекине вуланипе тăранма пулать.

Берлинра халĕ, хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, çĕнĕ йышши сорт соçиски (вĕтĕ шăрттан) шухăшласа кăларнă. Соçискăсен çав сорчĕн хуппи мĕнĕ çук. Малала тагах çĕнĕ йышши сорт кăларĕç-ха; унăн вара хуппи кăна мар, ашĕ те пулмĕ. Ăна шухăшласа кăларсан, Германире апат-çимĕç ыйтăвĕ пĕтĕмпех тăтăласса шанма та пулать.

Тепĕр хаçат пĕлтернĕ тăрăх, булăчнăйсенче Берлинра сывлăшлă çăкăр сутаççĕ. Вăл çăкарта сывлăш нумай, чусти, хăпарса тăраканскер, сахал, теççĕ. Пирĕн шутпа, Берлин усламçисен сывлăшпа услам тума тытăнмала, ахалĕн Берлинăн çăкăрĕ, хаклă пирки, илекенĕсĕр, илес текенни—çăкăрсăр. Крендĕлсене буржуйсем илсе пĕтереççĕ, ĕççыннисем ваљљи крендĕл чусти хушшинчи сывлăшĕ çеç йулать.

Германи климăчĕ фашиссемшĕн пырать, ĕççыннисемшĕн сивĕ. Правитĕлствă çыннисем пухăнса ларакан çуртсенче „Германин ырă кунĕсем“ çинчен хĕрӳленсех калаçнă пирки, тарласах каймала. Совет Сойузĕ йышăннă çĕнĕ Конституци çинчен правитĕлствă çыннисем хушшинче сăмах тухса кайсан, стена çине çакнă Реомӳр градусникĕ нуљран нумай градус айала анса ларать, тет.

Хĕрарăм арçынпа тан концентраци лагĕрĕсенче çеç: вĕсенче хĕрарăмсене арçынсемпе танах тĕрлĕ майлă хĕнесе асап кăтартса усраççĕ. Ытти çĕрте... Гитлĕр хĕрарăм ача çуратма анчах кирлĕ, тет.

Германире наукă—вăтам ĕмĕрти схоластикă. Университетсенче ĕççĕр йулмали калăрсене хатĕрлеççĕ. Геолăг—ĕçлеме вырăн тупайман пирки, çĕр тĕпнех анса кайма хатĕр, ботаник—хăйве ваљљи çиме йурăхлă куракăсем çарансем тăрăх шыраса çӳрет, археолăг—Берлинри кирлĕ мар йапаласем тăкмали вырăнта (свалкăра) чакаласа конçерв коробкисем шырать (тĕпне йулнине çиселесе хырăмне тăрантарма). Ĕççĕр йулнă гидролăг—хăйсене хăйсем вĕлерес текенсене шыври тарăнрах вырăнсене кăтартнипе укçа тупса, ытти ĕççĕррисенчен аванрах пурăнать.

Берлинра шăл тухтăрĕсем патне çӳрекенсем сахал, мĕншĕн тесен хăшĕсен шăлĕсене штурмовиксем çапа-çапа ӳкерсе пĕтернĕ те, халĕ шăлсăрах пурăнаççĕ, теприсене ĕççĕр йулнисене шăл кирлĕ мар (çимели çук), ыттисем шăл тухтăрĕ патĕнче те çăварĕсене уçма хăраççĕ.

Пианист-музыкант: ĕлĕк чух пианинă вырăнне ма скрипкă калама вĕренмерĕм-ши, пианинăна йатса килĕрен-киле çӳреме, пуйан çынсен чӳречи умĕнче калама çук, тесе ӳкĕнет.

Артист, ĕлĕк сценă çинче безработнăй роље аванах выљаса пынăскер, пурнăçра безработнăй пулса пурăнма нийепле те хăнăхса çитмен пирки хуйхăрать.

Германири театăрсем пĕр майлăраххисем: правитĕлствă çыннисемпе фашиссем, вырăсла каласан, „театр военных действий“ тенине йуратаççĕ. Чухăнсен: „Хĕвел тухать, хĕвел анать, ман тĕрмере пăч тĕттĕм“ йурра йурлама та ирĕк çук.

Спорт вăййисенчен Германире кĕрешӳ штурмовиксем хушшинче пит нумай саралнă: пуринчен ытла вĕсем фашисăма сийенлĕ шухăшсемпе тата забастовкăсемпе кĕрешеççĕ. Теллесе перекенсен организацисене—штурм отрйачĕсем, теççĕ, вĕсем, мишен вырăнне, рабочисем çине тĕллесе переççĕ. Малала штурмовиксем хуласен урамĕсене çын пуç шăммисемпе сарса тухса, вĕсем çийĕн тупăсем турттарса кайма шухăшлаççĕ.

Германири строитĕлствă çинчен каласан, унта пуринчен ытла концентраци лагĕрĕсемпе çар лагĕрĕсен строитĕлстви пырать тата унтах агреççи (йут çĕрсем çине вăрçăпа кайса туртса илес) плансене тăваççĕ...

Хутмали хатĕрсем çителĕксĕр пирки, Германире фашиссем ӳлĕм ырă кунсем пулас ĕмĕтпе ăшăнаççĕ... Пропагандă министăрĕн—Геббељсăн „Културăсен палатине“ тĕнчери паллă писатĕлсем (Гейне, Анатољ Франс, Ептон Синклĕр, Емиљ Золља, Горкий, Ремарк, Цвейг, т. ыт.) çырнă кĕнекесене çунтарса ăшăтаççĕ.

Германи çинчен каламалисене пĕтĕмпех калама ытла нумай çырмала. Çавăнпа епĕр вăл çĕршыври Ганновер йатлă хулара нумай пулмасть пулса иртнĕ пĕр ĕç çинчен çеç кĕскен каласа хăварасшăн.

Çав хулара Хаљхорн йатлă пĕр тухтăр пурăннă. Унăн ухмахсен çурчĕ пулнă. Ăна вăл хăй вăйĕпе тутарса тытса усранă.

Хаљхорн чĕрĕ чухне аван патриот хисепĕнче тăнă, вырăнти влаçсене нимĕнле иккеленӳсемпе те хирĕçӳсемпе те чăрмантарман.

Нумай пулмасть çав тухтăр вилсе выртнă. Вилнĕ хыççăн унăн хурăнташĕсем пухăннă та вилес умĕн вăл мĕн мĕн каласа хăварни çинчен çырнă хутăн канвертне уçнă. Хучĕ çине тухтăр ак çапла сăмахсем çырнă пулнă:

„Хам вăйран тытса усранă ухмахсен çуртне национал-социалиссен çулпуçĕсене пурăнма парса хăваратăп“, тенĕ.

Иван Мучи.

## Илеççĕ

— Сирĕн учитĕлсем хаçат-журналсем илмеççĕ пулмала: шкулта пĕр хаçат-журнал та курăнмасть...

— Мĕнле илмеççĕ, илеççĕ. Шкул ваљљи те хăвармаççĕ.

Шывçи.

## Клас руководитĕлĕпе вĕренекен

— Ма есĕ, Паймаков, ĕнер уроксем хыççăн класри чечексене тула сивĕ çĕрех кăларса лартнă? Тулта халĕ сивĕ 10-12 градус вĕт!

— Йестествознанине вĕрентекен учитĕл: чечексем каçхине кислород сывласа илсе, кайала углекислый газ кăларса сывлăша пăсаççĕ, терĕ. Пирĕн класри чечексем епĕр ыран сывлас сывлăша ан пăсчĕр тесе, кăларса лартрăм.

И. ТИХĂНĂВ.

# Мартын савӑнӑҫӗ

Варука хуҫ те мӗн кала, ӗненмест. Мӗншӗнне епӗ хам та пӗлместӗп. Темле ӑна пӗрре ҫамрӑк чухне упӑшки улталанӑ, теҫҫӗ, ҫавӑн хыҫҫӑн ҫынсене ӗненме те пӑрахнӑ. Пӗлсех тӑратӑп, кала есӗ: „кӑҫал хӗлле пулаҫ" тесе, вӑл сана: „кӗтсех тӑр, пулаҫ сана", тет. Епӗ ӑна: „Ишек колхозӗ пӗвере карап пулӑ ӗрчетет", терӗм те, вӑл: „кит ӗрчетмест-и?"—терӗ. Пӗрре ӑна упӑшки Мартын: епӗ сан упӑшку, тенӗ те, Варук тӳрех: суй, кӗтсех тӑр, упӑшка сана, тесе каласа хунӑ. Ун хыҫҫӑн Мартын арӑмне шанман пирки кӑшт вӑрҫӑ пуҫланмарӗ.

Пӗрре темле доклад тунӑ чух сӑмах майӗн пӗр ҫын (камне астӑваймарӑм) ҫӗнӗ сурт пахча-ҫимӗҫӗсем туса кӑларнисем ҫинчен каларӑм. Варук тӳрех:

— Пирӗн йалта Ахӑлтай Микулӗ ҫырмари вӗлтрен ҫине сыпса пилӗк килограм арбуз туса илчӗ,— терӗ Марине инкене айӑкран тӗртсе.

Нумай ачалисене патшалӑх пулӑшу памала туни ҫинчен каласа кӑтартсан та вӑл пачах ӗненмерӗ.

— Параҫ, кӗтсех тӑр! Мӗн икӗ пин тенкӗ укҫа шӑрпӑк терӗр-и есӗр? Есӗ ҫуратса тӑр, патшалӑх сана укҫа пар. Ун чухлӗ укҫа мар, тарӑн Урпаш вӑрманӗнчи йавӑҫ ҫӳлҫи те ҫитес ҫук.

— Ничево, укҫа уплинке мар, хӗлӗн-ҫӑвӗнех тупма пулаҫ,—кӑшкӑрчӗ Хӑнктамар Макарӗ хӑйӗн виҫкӗтеслӗ йанахне хӑмла шалчи пек вӑрӑм пӳрнисемпе йӗнчен-йӗнчен шӑлкаласа.

— Урине инке, сан ултӑ кӑна, тепре кирлӗ пулаҫ,—кулчӗ тахӑшӗ.

— Урине тепре мар, тӑват-пиллӗк тепре те ҫуратӗ, санӑн хӗсӗрӗн ним те ҫук,—кулкаласах тӑрӑхларӗ Урине.—Епӗр сирӗн пек аборт таврашӗ туман.

Варук ӗненмесӗрех киле таврӑнчӗ. „Кай, ҫавӑн чухлӗ укҫа пама епӗ патшалӑха чул ҫурт лартса пани мӗн?"—шухӑшларӗ вӑл.

Мартын та ӗненмерӗ.

— Ара, хӑш тӗнчере пулнӑ вӑл патшалӑх ҫавӑн чухлӗ укҫа пани? Тем те шутласа кӑларӗҫ ку халӑх. Каллех Мирун Ваҫилчӑ суйрӗ пуҙ. Мӗн сана укҫасем парса ларма патшалӑх сан савни-и мӗн?—терӗ те арӑмӗнчен кулкаласа пӗкӗ пек кукӑр чӑпаклӑ чӗлӗмне саралнӑ шӑлӗсемпе ҫаклатса тухса кайрӗ.

* * *

Варук ҫухалчӗ. Час таврӑнмарӗ вӑл. Кӗтрӗкӗтрӗ Мартын—арӑм ҫук. Ҫӗр каҫрӗ—ҫук. „Кам пӗлет, тем ватлӑхра... йерсе ан кайтӑр" шутларӗ аптӑранипе Мартын.

Тепӗр кунне каҫхине шӑпах хӑй ҫутнӑ тӗле Варук савӑнӑҫлӑ пырса кӗчӗ. Хул хушшинче темӗскер пысӑк ҫыхӑ.

— Аҫта тупрӑн? Арӑмӗ таҫта ҫӳрет те, упӑшки ача пӑхса лар...

— Епӗ ӗҫпе ҫӳренӗ!..

— Ӗҫпе!—ҫыхха туртса салатса тӑкрӗ Мартын. Ҫыхӑран пусма-ҫитсӑ, тата вак-тӗвек йапаласем тухрӗҫ.

— Ӑҫтан тупрӑн кусене?—Печени коропкине урапа тапса салатса йачӗ Мартын?

— Тупма кам пӑрахса ҫӳрет?..

— Печени? Мӗн тума! Есӗр печенисем ҫисе...

— Ачасене валҙи, ара...

— Вӑрӑ! Есӗ вӑрӑра пулнӑ. Кравуул. Пурӑнмастӑп вӑрӑпа. Микехвер теп, Микехвер, чуп председатӗл патне! Чуп, чуп! Мартын арӑмне вӑрӑра тытнӑ те. Чуп! Ӑҫтан тупрӑн ун чухлӗ укҫа?

— Ӑҫтан тупрӑн теме, пӗлмест пек... Ҫаратма кай...

— А-а, ҫаратма кайнӑ!—пӑрлӑ шыва тытса пӑрахнӑ кушак пек чӗтреме пуҫларӗ Мартын, малала мӗн каланине итлемесӗрех. Ун куҫ харшисем карас йашки пек сиксе вӗреме пуҫларӗҫ, ура тупанӗсем, вӗри ҫатма ҫине пуснӑ пек, пӗҫерсе кайрӗҫ, чӗре, ӳпке, пӗвер таврашӗсем ҫавра ҫил пырса кӗнӗ пек лӑканма пуҫларӗҫ.

— Пӗтерчӗ! Арӑм пӗтерчӗ! Уйӑрӑлатӑп. Укҫа ҫаратнӑ. Халиччен курман намӑс. Кравуул!—хӑйне тӗллӗн такам кӗвентепе ислетнӗ пек хӑрушшӑн кӑшкӑрчӗ вӑл.

— Чим-ха, Мартын, чим, калам-ха, итле!

— Итлеместӗп! Ан чӗн мана. Есӗ вӑрӑ тунине пытарас, мана хутӑштарас тетӗн-и? Ҫичӗ ача амӑшӗ пулнӑ,—ҫапла хӑтланатӑн!

— Мӗншӗн? Епӗ вӑрӑра пулнӑ...

— Вӑрӑра ҫав. Пӗлтӗм ӗнтӗ каламасӑрах. Ах!.. Мартынӑн ҫӑпата кантри пек йун тымарлӑ алли, ват хурама турачӗ майлӑ кукӑр пӳрнисем Варук ҫӳҫне йаваласа илес чух кӳршӗ ҫынни хашкаса чупса кӗчӗ.

— Мӗнле апла пулчӗ? Ӑҫта ҫаратрӑр?—сулахай ури алӑк урлӑ каҫичченех ыйтрӗ вӑл.

— Кай, ухмаха йертӗн-и мӗн? Калама та...

— Намӑс, намӑс калама!—кӑшкӑрчӗ Мартын.— Кала ӑҫта вӑрланине!

— Ан кӑшкӑрӑр! Халиччен ҫын йапалине виҫӗ пуслӑх тӗкӗнмен те... каккуй ҫынӑнне вӑрлама, хамӑнне вӑрласран сехре ҫук. Алӑра икӗ пин тенкӗ укҫа пур та, вӗсем вӑрра тытаҫҫӗ. Ӗнер ачасемшӗн пачӗҫ...

— Ачасемшӗн? Чӑнах-и? Илтӗн-и?

— Ой, Варук! Чӗкеҫ! Ма паҫӑрах каламастӑн? Каларӑм уш параҫҫӗ пуҙ тесе. Вот епӗ пӗлетӗп те пӗлетӗп. Малтанах пӗлтӗм патшалӑх парассине. Варук, чунӑм, епӗр савӑнса пурӑнӑпӑр. Епӗр ӗмӗр-ӗмӗр пӗр-пӗрне йуратнӑ. Ех, савӑнӑҫлӑ пурнӑҫ!—ыталарӗ Мартын Варука.

Кӳршӗ ҫынни кулса тухса кайрӗ.

**Н. Чурпай.**

---

## „Кӑтартулӑ" шкул

— Шӑхасанти вӑтам шкула райҫутпайӗ кӑтартулӑ шкул вырӑнне хураҫ. Вывӗски ҫинче те: „Шихазановская образцовая средняя школа" тесе ҫырнӑ.

— Ӑҫтан кӑтартулӑ пултӑр вӑл. Вӗренӳ пахалӑхӗ ҫителӗксӗр, вӗренекенсем шкула ҫӳрени 85 процент, дисциплинӑ тени йапӑх...

— Мӗнле кӑтартулӑ мар, ҫӳлӗ вырӑнта лараҫ, савӑнпа „кӑтартулӑ" тенӗ.

**Ив. Иванҙук.**

# Кăвакал

*(Йуптару)*

Чăхă автана пĕр ирпе
Кĕлт! тĕкрĕ хӳрипе:
— Пăйахам! — тет. — Итле-ха, пăйахам!
Куратни çав кăвакала?
Карташĕнче ун пек кахала
Ĕмĕрте курман епĕ хам.
Хăй вăл кунĕ-кунĕпе
Мухтанать курни-илтнипе,
Калăн, вăл çĕр çăмхи тавра çаврăннă...
Тĕрĕссипе каласан,
Çак кăвакал мĕн курнă?
Шутла: — пит инçе кайсан—
Хапха айĕнчен тухать те çитет васана,
Каçпа вăл кайаллах таврăнать картана.
Унта вăл ыттисемпе хутшăннă.
— Сăмса! Еп Варшав патĕнче çапăçнă,
Ман пекки сирĕн хушăра пит сахал! —
Тесе хучĕ ăна хирĕç кăвакал.

* * *

Пӳлес мар кăвакалăн сăмахне,
Ан тив, вăл мухтантăр.
Çак йуптарувăн тĕп йĕрне
Вулакан хăйех ăнлантăр.

Н. Евдокимăв

---

## Брем пĕлмен йытă




— Австралире тискерленсе кайнă йытăсем пур. Вĕсене унта „динго“ теççĕ.
— Тискерленсе кайнă йытăсем Австралире анчах тетĕни-ха?
— Ăçта пур тата?
— Германипе Италире. Вăл йытăсенчен унта штурм отрйачĕсем организациленĕ.




## Кĕске йумах

— Итле, йумах йарса парам Туппине тупатни?

— Тупап. Кала!

— „Бандит бандит ваԓԓи чукмар йарса тăрат̆“. Çавă мĕн?

— Çавă-и? Германи фашисăмĕпе Испани фашисăмĕ пулат̆.

## Катон

— Авал Римри çенатăр Катон пĕрмайах, пурнăçĕ тăршшипех: „Карфагена çĕмĕрсе тăкмала“ тесе пурăннă.

— Апла вăл фашиссен пуçлăхĕ пулнă пулĕ.

— Ма апла шухăшлан?

— Фашиссен пуçлăхĕсем те çавăн пек пермайах „Мускава çĕмĕрсе тăкмала“, теççĕ.

## „Перекет“

— Кĕнеке çыракансен перекетленсе тăракан укçа нумай, тет. Укçисене вĕсем перекет кассисенче тытаççĕ-ши?

— Унта мар. Чăвашиздатра. Пĕлтĕртенпе нумайĕшĕ пĕр пус та илмен.

## Тупăк

— Епĕ почтă йешчĕкне иртнĕ уйăхра çыру йатăм. Халĕ шухăшлатăп: епĕ çыру йанă йешчĕк почтă йешчĕкĕ мар, тупăк пулнă пулĕ, тетĕп.

— Ма апла шухăшлан?

— Ара, пайан йулташран илнĕ çыру тăрăх вăл çыру манăн уйăхран та çитеймен. Тупăка кĕрсе выртнăран çитеймен ĕнтĕ вăл.

## Тĕрĕс

— Ма есĕр упăшкупа иксĕр пĕрмайах вăрçатăр? Мĕн çитмерĕ сире?

— Куԓтурлăх çитмерĕ.

## Йетĕрнери колхозник çуртĕнче

— Заведуйушчи йулташ! Епĕ хăнкăла çине ларнă.

— Ларнă. Куншăн сана питĕ пысăк тав. Ахалĕн ăна нийепле те тытайрас çук.

## Вăрăм кăранташсшăн

— Шупашкарти куԓтаварсем сутакан магазинта тĕрлĕ тĕслĕ çыракан кăрандашсем илтĕм. Ма кăрандашĕсене вăрăмрах туманши? икшер метăрла тусан аванрах пулмала.

— Ма?

— Кăрандаш варрисем шĕвĕртме тăрсан хуçăлса кайаççĕ. Виçĕ минут хушши шĕвĕртме те çитеймеççĕ. Вăрăмрах пулсан нумайрах вăхăт шĕвĕртме çитмеле.

## Иккĕн кирлĕ

— Шупашкарти Рабочи поçолăкри бакалей таварсем сутакан ларйок умĕнче ма кирек хăçан та черет пулат̆? Унта дефицитлă çимĕçсем сутаççĕ-и мĕн?

— Мĕн есĕ кирлĕ мара калаçатăн ара. Çимĕçсем мĕн илес тени пурте çителĕклĕ пур чухне дефицитлă çимĕç ниçта та пулма пултараймаст̆. Ил кăна, хулара пурте пур халĕ.

— Апла пулсан, унта ма кирек-хăçан та черетсем пулаççĕ. Мĕн дефицитлăран?

— Горвнуторгăн... прикашчиксем дефицитлăран.

## Ик ача

— Анне пирĕн 10 уйăхри йămăка утма вĕрентет.

— Утма вĕренни мĕн вăл. Утма такам та пĕлет. Вĕçме вĕрентес пулат̆.

## Тĕлĕнмели çук

— Тĕлĕнмеле. Миçе ерне ĕнтĕ кашни пасартах санăн піччу хăйĕн арăмĕпе çӳрет. Ĕлĕк пĕрле çӳремесчĕç-çке.

— Мĕн тĕлĕнмели пур унтан. Халĕ пĕр-пĕринчен ЗАГС урлах уйăрăлнă хыççăн пĕр-пĕрне курас килекен пулат̆ пулĕ.

## Чăвашиздат типографинче

(Цинкографи кислота пĕтнипе вăхăтлăха ĕçлеймен кунсенче).

— Тĕлĕнмеле ку цинкографи цехĕнчи рабочисенчен. Пурăнмалăх хватерĕсем те пур, ĕçукçи те хăйсене тивĕçлине илеççĕ, çапах „администраци лайăх мар“ тесе çӳреççĕ.

— Ну?! Пурте ун пек мар пулĕ.

— Пурте çав, пĕтĕм цехĕпех.

— Ма-ши апла есĕр вĕсен кăмăлне кайман?

— Ăçтан вĕсен кăмăлне кайса пырăн. Ара, вĕсене ĕçукçи хăйсене тивĕçлине пĕтĕмпех панипе сахал, ĕçне те кирек хăçан та памала.

## Тĕнчере пуринчен те малта

— Спортменкă Захарăвă коԣкипе йарăнас тĕлĕшпе тĕнчери икĕ рекорда çапса мала тухнă.

— Коԣкипе йарăнас тĕлĕшпе мала тухни мĕскер вăл. Совет Сойузĕнчи пур хĕрарăмсем те арçынсемпе пĕртан пулас йенчен тĕнчери мĕн пур рекордсене те çапса мала тухса тăнă.

## Профбӳрократ

— Хăвăрăн местком ваԓԓи ма „Капкăн“ çырăнса илместĕр?

— Çырăнма хушакан циркуԓар пулманран.



— Сивве кӗтӗмӗр. Сирӗн лаша вити тумали перенесем урамрах выртаҫҫе.
— Ан хӑра! Пӗрене сивӗрен хӑрамасҫ, вӑл лаша мар.

Н. АЙЗМАН.




*Пӗр пайлӑ комеди*

**Чӑваш Реперткомӗ сценӑ ҫинче лартма ирӗк панӑ**

**ВЫԒАКАНСЕМ:**

1. **Петр Петровчӑ**—колхоз тимӗрҫи.
2. **Иван Иванчӑ**—колхозник.
3. **Йорок Ваҫилчӑ**—коӊух.
4. **Пӑртуҫҫи**—колхозница.

Колхоз килкартинче

Иванчӑ—Петр Петровчӑ, ӑҫта кайма ирех?

Петровчӑ—Инкек килсе тухрӗ-ха, Иван Иванчӑ! Ой-ой!..

Иванчӑ—Мӗнле инкек пултӑр тата?

Петровчӑ—Арӑм тем аптӑрама пуҫларӗ. Пилӗк кассах антараҭ, тет. Ҫухӑраҭ ҫеҫ.

Иванчӑ—Апла пулсан, сан арӑму ача ҫуратма тапранман-и?

Петровчӑ—Ача туса парас тет ҫав. Ой, сывлӑша ҫавӑрса йараймастӑп.

Иванчӑ—Ача ҫуратаҭ пулсан, инкек мар-ха вӑл, ӑна телей тес пулаҭ.

Петровчӑ—Ӑна епӗ хам та инкек теместӗп те-ха. Тухтӑра илсе кайма лаша кирлӗччӗ те... бригадир ҫук. Есӗ те виҫҫӗмӗш бригадӑн бригадирне курман пуԓ?

Иванчӑ—Курман.

Петровчӑ—Каҫхине леш хусах Пӑртуҫҫи патӗнче терӗҫ, те хаԓ те ҫавӑнтах ӗнтӗ вӑл.

Иванчӑ—Пӗлместӗп.

Петровчӑ—Килне карӑм—килӗнче ҫук, правленине карӑм—унта та ҫук. Йала тухрӑм—йалта та ҫук, урама тӑрӑх виҫӗ хут чупса тухрӑм—урамра та ҫук. Уйа кайман-им тесе вышкӑ ҫине те хӑпарса пӑхрӑм, унта та ҫук. Кунта килтӗм... Ой!.. *(Лараҭ)*.

Иванчӑ—Кунта та ҫук.

Петровчӑ—Ну, мӗн тӑвас-ха ӗнтӗ ман?

Иванчӑ—Тем тӑватӑн ӗнтӗ. Еп урапине сӗрсе хатӗрлерӗм, лашине тытса килес те ӗҫе кайас.

Петровчӑ—Иван Иванчӑ, кайнӑ чухне ҫул ҫинче бригадира курсан кала-ха, хӑвӑртрах килтӗр!

Иванчӑ—Йурӗҫке, калӑп. *(Кайаҭ)*.

Петровчӑ—Пӗрремӗш бригадӑннах вӑн, пурте вырӑнлӑ, бригадир те килӗнче... Виҫҫӗмӗш бригадӑнне илсен... Председателӗ виҫҫӗмӗш бригадӑн лашине кӳл терӗ те... Ну мӗн тӑвас-ха ӗнтӗ. Ӑҫта кайас? Кама калас?.. Халиччен арӑм вилсе те выртрӗ пуԓ. Ах, Матроӊушкӑ!.. Матроӊушкӑ! Пӗргепӗр есӗ вилсен... Санпала пӗрле ҫуралас ачи те вилет. Ачи те ку ҫиччӗмӗш ача. Ваҫка пӗрре, Ваӊкӑ иккӗ, Веӊкӑ виҫҫӗ, Саӊкӑ тӑваттӑ, Фроҫӑ пиллӗк, Моҫӑ улттӑ. Улттӑ ача... Ку, ҫиччӗмӗш ачине, хӗрача пулсан, Нарспи... ывӑл пулсан Ҫеҫпӗл йатлӑ хурас тесе шухӑшланӑччӗ. Ҫичӗ ача ашшӗ, вӑл паттӑрлӑх вӗт. Анчах ӑҫта есӗ бригадир?.. Есӗ пӗлетни мана ҫав тери лаша кирлине. Ҫичӗ ача амӑшне, ҫичӗ ачи те сывӑ пулсан преми параҫҫӗ вӗт. Ӑҫта есӗ бригадир?.. Ӑҫта бригадир? *(Паузӑ)*. Ага, тепӗр тесен, тытрӗ те кӳлчӗ, мӗскер ыйтса тӑмали. Пуԓницӑна каймала тесен, никам та йатласа пӑрахас ҫук. Правленинче те чул чӗрелле ҫынсемех мар-ха. Каҫарӗҫ. Урапине сӗрес те кӳлес. Анчахураписем ӑҫта-ши? Аха, акӑ кунта пӗр урапа пур. *(Сценӑ хыҫнелле пӑхаҭ)*.

Йорок (*кӗреҭ*). Ӑҫталла, ӑҫталла? „Урапа пур“, курнӑ йантине... Есӗ пӑх малтан. Хӑш бригадӑн урапи вӑл.

Петровчӑ—Мана пурӗ-пӗр. Манӑн васкамала-ха.

Йорок—Епӗ урӑх бригадӑран урапа парса йамастӑп.

Петровчӑ—Еп санран ыйтса та тӑмастӑп. Мана ҫав тери урапа кирлӗ. Ес ӑнланатӑн-и?

Йорок—Никам та кирлӗ мар ҫинченех урапа патне килмест. Пурте кирлӗпе килеҫҫӗ.

Петровчӑ—Есӗ виҫҫӗмӗш бригадӑн коӊухӗ мар вӗт, мӗн пит кӑшкӑрса ҫӳретӗн.

Йорок—Епӗ хаԓ пӗччен, пӗр дежурнӑй коӊух. Кӗтӗве йамала мар лашасене виҫ бригадӑнне те пӑхатӑп, ӑнланатӑн-и. Ӑҫта-ха сан лаша кӳлмели ордӗр пур-и?

Петровчӑ—Ҫук.

Йорок—Ордӗрсӗр мӗн сӳпӗлтетсе ҫӳремели пур. Ордӗрсӗр кам сана лаша шанса параҭ?

Петровчӑ—Ордӗрне илме бригадире тупаймарӑмҫке.

Йорок—Ес тупайманнишӗн епӗ айӑплӑ мар ӗнтӗ.

Петровчӑ—Ну, мӗнле-ха ҫав тери бӳрократланса кайнӑ есӗ.

Йорок—Епӗ саккунлӑ тӑватӑп.

Петровчӑ—Саккунлӑ тесе ман арӑмӑн вилсе выртмала-им.

Йорок—Арӑму чирлӗ мар пуԓ те?

Петровчӑ—Арӑм ача ҫуратма тапраннӑ ҫав.

Йорок—Мӗншӗн паҫӑрах каламарӑн. Еп, таҫта пасара каймала тесе. Апла пулсан йара пар. Лашине тытса кил те, вӗҫтер.

Петровчӑ—Лаши ӑҫта тата?

**Йорок**—Кĕтӳре. Йалтан виç-тăват çухрăм çеç, ытла инçех мар пулас.

**Петровчă**—Ой-ой-ой!.. Лашине тытса килетчĕнех пĕр сехет иртсе кайăть.

**Йорок**—Ничево, иртмест.

**Петровчă**—Унччен урапине хатĕрлесе хурас-ха. Йорок Василчă! Хăш урапине кӳлмеле?

**Йорок**—Кирек хăшне кӳл. Кун пек васкавлă ĕçшĕн никамах та йатлас çук.

**Петровчă**.—Çак пасăр тĕлленĕ урапанах кӳлемха. (*Урапа туртисене сценă çине туртса кĕрет*).

**Йорок**—Кӳл, кӳл!

**Петровчă**.—Урапине сĕрес пулаťчĕ пуљ. Тикĕт лакунĕ ăçта-ши?

**Йорок**.—Пĕлместĕп.

**Петровчă**—Чим-ха, еп чупса çаврăнам, тупайратăп-и? (*Кайаť*).

**Йорок**—(*урапине пăхкаласа*). Е-кей!.. Ку урапин чекушки те çук иккен. Кайнă çĕртех кăстăрмачи тухса ӳкĕ.

**Петровчă**—(*кĕрет*). Лакунĕ пур, мазилки çук. Ăçта çăва патне кайса чикнĕ-ши?

**Йорок**—Пĕрелĕхе сĕрмесен те йурĕçке.

**Петровчă**—Ну, тепĕр тесен, инçе çулах мар. Хуллен, кайса килĕпĕр.

**Йорок**—Ара, ку урапине сĕрнĕ-иç. Пăх-ха тикĕчĕ йухаť.

**Петровчă**—Ку пит аван, чăнах сĕрнĕçке.

**Йорок**—Анчах ку урапин чекушки çук.

**Петровчă**—Ну?! Ак инкек! Ăçтан тупас-ха? Урапи тупăнчĕ, чекушки çук.

**Йорок**—Чекушкă тума нумай вăхăт кирли? Ав улмуççи туратттисем выртаççĕ. Тыт та ту.

**Петровчă**—Чăнах та.

**Йорок**—Анчах кунта пуртă тавраш çук вара.

**Петровчă**—Ак тата, улмуççи туратти пур, пуртă çук.

**Йорок**—Ну, васка-васка. Ман каймали пур-ха. (*Кайаť*).

**Петровчă**—Йорок Василчă! Сӳсмен таврашĕсем ăçтарах ара? Йорок Василчă! Вăт хăлхасăр. Илтмерĕ. Мĕн тăвас-ха ĕнтĕ? Мĕн тăвас?.. (*Паузă*). Е-ей, тепĕр тесен, ак çак çакăнса тăракан сӳсмене йышăнас та хурас. Лаша кӳлнĕ çĕре мĕн кирлĕччĕ-ха, хыпаланнипе пĕтĕм пуç çаврăнса карĕ. Нăхти пур-ши хăť? (*Йери-тавра пăхкалаť*). Нăхти те çук. Ех, пурăнăç! Кам айăплă-ши ĕнтĕ? Бригадирĕ ни килĕнче çук, ни правленинче çук, ни урамра çук, ни уйра çук, ни кунта çук. Бригадир çук—ордĕр çук. Ордĕр çук—лаша çук, лаши пулсан та, урапи çук, урапи пулсан та, тикĕчĕ çук, тикĕчĕ пулсан та, мазилки çук, мазилки пулсан та—чекушки çук, йăвăççи пулсан та, турти çук. Сӳсменĕ çук, йĕнерчĕкĕ çук, тилхепи çук, нăхтийĕ çук, урхалăх çук, пĕккийĕ çук, нимĕн те çук. Ех, йĕпе çине сапа!.. Йĕпе çине сапа, ťфу!..

**Пăртуççи** (*сасси*). Тр-р-р!.. Сто-ой!.. (*Кĕрет*). Ей, есĕ мĕн мен урапана туртса лартрăн унга. Пăххалĕ, курнă вăл кунта йантă урапа. Епĕ пур, çынсем тăриччен тенĕ пек килсе, сĕрсе хатĕрлесе хутăм та... Сан ăна куç курчĕ те пулаť.

**Петровчă**—Итле-ха инке, ман арăм...

**Пăртуççи**—Пĕлетпĕр епĕр сан арăмна. Мĕн кунта арăмна асăнса тăран. Арăмсем çинчен калаçма хăвăн тимĕрçĕ лаççуна кай. Сан арăму есĕ пур çинчех нимĕнле хуйăха та кĕрсе ӳкмен пулĕха. Ман акă виçĕ ачана тăрантарас пулаť. Санпа палкаса тăма вăхăт çук. Кай! Çынсенчен маларах кӳлсе пĕр-иккĕ хутлас хăť.

**Петровчă**—Ес, инке, питех ан вăрç ха. Виççĕмĕш бригадăн бригадирне курмарăн-и. Сирĕн пата пымар-и вăл?

**Пăртуççи**—Ан тăрăхласа тăр. Тем тăвăп еп сан бригадирупа. Унсăрăн арçын тупаймастăп-им.

**Петровчă**—Еп уншăн каламастăп та-ха.

**Пăртуççи**—Сан йаланах хусах арăмсенчен тăрăхласси. Лаççунта чухне кунĕпех çăварна хупмастăн та, кунта та çавах иккен.

**Петровчă**—Çаплах, тĕрĕс! Анчах еп сана ку урапана памастăп.

**Пăртуççи**—Мĕн? Ес тата сăмахпа çеç мар, ĕçпе те мăшкăлас тетĕн-и?

**Петровчă**—Есĕ пĕлместĕн, мана çав тери урапа кирлĕ.

**Пăртуççи**—Сана кирлипе мана мĕн ĕç.

**Петровчă**—Пĕр-ик сехетлĕхе çеç.

**Пăртуççи**—Кай-кай! (*Урапа туртисене тытса сценă хыçнеле тĕртет. Петровчă Пăртуççине тытса кайала туртаť*).

**Петровчă**—Пăртуççи инке, Пăртуççи инке...

**Пăртуççи**—Йар, йар тенĕ сана!

**Петровчă**—Йамастăп, йамастăп!

**Пăртуççи**—Есĕ çаплах йамастăн-и? *Петровчăна тĕртет, леш кайала кайса лараť*). Ак сана!.. (*Урапине тĕртсе тухса кайаť*).

**Петровчă**—Ой-ой вĕлерчĕ, пĕтĕмпех вĕлерчĕ. Çĕр çумне çыпăçсах лартăм пуљ. (*Тапранса тăраť*). Çук тăраймастăп. Чăнахах çыпăçса ларнă иккен. Ак сана пуљница!.. Ак сана арăм! Ак сана çичĕ ача!..

**Йорок** (*кĕрет*). Çиччĕмĕш ача мар, Петр Петровчă, саккăрмĕш тес пулаť.

**Петровчă**—Мĕнле саккăрмĕш?

**Йорок**.—Хаљ хĕрачуна урамра куртăм та, мучи, пирĕн атгене курмарăн-и тет. Пирĕн анне пĕр харăс икĕ ача çуратса пачĕ, тет.

**Петровчă**—(*сиксе тăрса*). Н-ну-у!.. Чăнах-и?..

**Йорок**—Чăнах! Пĕри хĕр ача, тет, тепри ывăл ача, тет.

**Петровчă**—Акă, хайхи Нарспипе Çеçпĕл!

**Йорок**—Телей санăн, Петр Петровчă, телей!..

**Петровчă**—Пайан ĕнтĕ мана: бригадир та, ордĕрĕ те, лаши те, урапи те, тикĕчĕ те, мазилки те, чекушкийĕ те, йăвăççи те, пуртти те, сӳсменĕ те, нăхти те, йĕнерчĕкĕ те, тилхепи те, нимĕн те кирлĕ мар. Анчах ку виççĕмĕш бригадă çинчен, пухура хам пуçласа хам ыйту лартатăп. Намăс вĕт виççĕмĕш бригадăна! Пĕтĕм колхозĕпе йат параť. Ун пек бригадир районĕпе... районĕпе мар, республикĕпе çук пулĕ. Çак ĕç çинчен „Капкăна“ çырса парсан, мĕн курса ларас пулаť-ха. Пирĕн бригадă пĕтĕм чăваш халăхĕ умĕнче намăс кураť вĕт! Намăс кăтартмала та. Унсăрăн çакăн пек ирсĕрлĕхсем нихăçан та пĕтес çук. Халĕ киле вĕçтерес! Ну, хаљ ĕнтĕ, тепĕр 6 кунтан манăн пата ачасене курма хăнана пырăр ушкăнĕпех!.. (*Тухса кайаť*).

ЧАРШАВ




**Ыйту:**—Мĕнле шăна цеце шăни?

**Ответ:**—Цеце шăни Африкăн тропикри пайĕнче пурăнать. Çав шăна çыртсан килти выльăхсем пурте пекех вилеççĕ: ĕтеме çыртсан, етем пит йăвăр сикекен чирпе, ыйхă чирĕпе чирлет. Сирĕн Куславкка районĕнчи Карач шкулĕнчи Осоавиахим организаторĕ Широкин та питĕ йăвăр ыйхă чирĕпе чирленĕ. Анчах ăна цеце шăни çыртман, „кахал шăни" çыртнă. Вăл чиртен ăна Осоавиахимăн Куславккари райсовечĕ сыватма пултарать.

**Ыйту:**—Мĕн калама пултаратăн есĕ Тутар республикинчи Октябĕр райĕçтăвкомĕнче ĕçлекен пĕр йулташ çинчен?

**Ответ:**—Италинче Турино хулинче пулса иртнĕ выставкăра çын пек ĕçлекен машинă кăтартнă. Вăл утса çÿренĕ, çаврăнкаланă, аллисемпе вылятнă, хăш-пĕр сăмахсене калама пултарнă, тата çырусем çырнă. Сирĕн йалсовета декабĕрĕн 1-мĕшĕнче Октябĕр райĕçтăвкомĕ икĕ отношени йанă. Пĕрин çине „5-мĕш числара совещани пулмасть" тесе, теприн çине „совешчани пулать" тесе çырнă, хăшне ĕненмелине каламан. Çавăнпа çав хутсене епĕр çÿлте асăннă етемле ĕçлекен машинă çырнă пулĕ, тетпĕр.

**Ыйту:**—Строителствăна мĕнле хăвăртлатма пулать?

**Ответ:**—Халĕ Мускаврa çуртсене „шултăра блоклă строителства" тенĕ майпа тума тытăннă. Вăл строителствăра пĕтĕм ĕçсен 70 процентне механизациленĕ (машинлатнă) пирки, нумай пулмасть, „Известия" хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Дровйанной плошчĕдре 10 кун хушшинче пысăк çурт туса лартнă.

Мускаврa 10 кун хушшинче пысăк çурт тунă. Сирĕн „Батрак" колхоз (Павлă районĕ, Тутар республикĕ) лаша вити 1932-мĕш çулта тума тытăннă та, 1936 çулта та туса пĕтермен, 1937 çула хăварнă. Вити питĕ пысăк пулать пулĕ. Мускаврa вунă кун хушшинче тунă çуртран миçе хут пысăкрах пуласине пĕлме, 1932 çултанпа миçе вунă кун иртнине пĕлмеле. Чăнах пысăк-и вăл вите сирĕн йе вите вырăнне строителсем кĕрсе выртнă ыйăх чăпти пысăк.

**Ыйту:**—Тăн мĕнрен килет?

**Ответ:**—Тăн—миме ĕçленинчен килет. Тăна тĕреклетме миме ĕçлессине тĕреклетмели майсем туса памала: тавлăкра 7—8 сехетрен кайа мар çывăрмала, апат-çимĕç вăхăтра çимеле, ерех тавраш ĕçме йурамасть, пуçпа тумали ĕçсене тавлăкра 7 сехетрен ытла мар ĕçлемеле, т. ур. Сирĕн Хутăр Шĕнерти (Çĕрпÿ р.) колхоз председателĕн тăнĕ манакан пулнă: пĕр вырăн кантăра таттармасăрах, ана çине манса хăварнă. Председателĕн тăнĕ ерех ĕçнĕрен çавăн пек манакан пулман-ши, тесе те шухăшлатпăр. Тен унăн нервăсем пăсăлнă. Пухура хайĕнчен ыйтса пĕлĕр-ха, мĕн пирки апла пулнине каласа пама пĕлессĕн туйăнать.

**Ыйту:**—Куçпа пăхса та палăрман йапаласем тĕнчере чăнах та пур-ши вара?

**Ответ:**—Пур, ачам, пур! Сăмахран, бактерисем куçа курăнмаççĕ (пĕр милиметăрта 2.000 бактери вырнаçма пултарать). Сирĕн Тавăшкассинчи (Çĕрпÿ р.) кĕçĕн вăтам шкулти пионер вожатăйĕ Матвейĕв ĕçне те курма çук, мĕншĕн тесен унăн ĕçĕсем 1 милиметăрăн 2.000-мĕш пайĕнчен те пĕчĕкрех.

**Ыйту:**—Ăçта чи мăнă кăмпа тупма пулать?

**Ответ:**—Швейцарири йалхуçалăх выставкине тĕлĕнмеле пысăк, питĕ сайра тĕл пулакан кăмпа тăратнă. Вăл кăмпан йăвăрăшĕ 4 килограм çурă, шлепкин диаметрĕ 30 сантиметăр пулнă. Унтан йăвăртарах тата пысăкрах шĕлепкелĕ кăмпа курма Атнашевă (Шăхасан р.) вăрманне пымала. Вăл кăмпана йалти çынсем „Тихăн" тесе йат панă, вăрман ведăмстви вăрман хуралçи тесе хисеплет. Анчах çав мăнă кăмпа пысăк шлепки айĕнчен вăрман вăрлакансене кураймасть. Вăл кăмпана, çĕрсе кайасран, вăрман вăррисем ерех пички ăшĕнче усраççĕ.

**Ыйту:**—Çын чĕри минутра миçе хут тапать?

**Ответ:**—Çитĕнсе çитнĕ çын чĕри минутра 75 хут тапать. Урмайри (Елĕк р.) комсорг Павлăв Вениамин чĕри пуп умĕнче кума пулнă чухне, „шуйттанран уйăрлатăп" тесе тăнă чухне минутра миçе хут тапнине пĕлместпĕр, çапах та сахалах тапман пулĕ, тесе шухăшлатпăр (савăннипе тата райкомол пĕлесрен хăрарах панипе). Кайран Саньккă пÿртне ташласа кисретнĕ чухне унăн чĕри минутра 106 хут тапнă, теççĕ.

**Ыйту:**—Çăвартан усал шăршă кĕни мĕнрен килет?

**Ответ:**—Çăвартан усал шăршă кĕни йе шăл пăсăлнăран, йе шăл çумне кирлĕ мар йапаласем çыпăçса тулнăран, йе çăвара пÿрлешке майлă йапала тухнăран, йе вар хырăму çинĕ апата час çĕртме пултарайманран, тата урăхран та. Ту Мучарти (Йетĕрне р.) колхозăн 2-мĕш бригадă бригадирĕ Алмазăв Иван çăварĕнчен усал шăршă бригадăна чи кайра илсе пырса ÿсĕрĕлсе çÿренĕ пирки кĕрет. Вăл шăрша пĕтерме тухтăр кирлĕ

мар, колхоз пухувӗнче ӑна лайӑхрах пӗҫертсе йарсан, ҫӑварӗнчен тухакан шӑршӑ та пӗтме пултарать.

**Ыйту:**—Ал чӗтрени мӗнрен килет?

**Ответ:**—Ал чӗтрени ӑспа ӗҫлесе ывӑннӑран та, нервӑ ҫиҫтеми чирленӗрен те, чылай вӑхӑт хушши ҫителӗклӗ ҫывӑрманран та, ерех ытлашши ӗҫсе пурӑннӑран та килет. Мӑн Хирлепри (Вӑрнар районӗ) „Строител" колхозӑн фермӑ пуҫлӑхӗ пулса пурӑннӑ Варламӑвӑ Валентинӑн алли—колхозӑнне 25 килограм та 600 грам ҫу, колхоз председателӗпе пӗрле, ҫисе йанӑран чӗтрет („вӑрӑ алли чӗтрет" теҫҫӗ чӑвашсем).

**Ыйту:**—Хӑлха начар илтекен пулсан пулӑшма пулать-ши?

**Ответ:**—Хӑлха, сӑмса, пыр чирӗсене сыватакан тухтӑр патне кайса каласса пӑх. Хӑлха начар илтекен пулсан, сасса вӑйлантарса илтӗнтерекен аппаратсем те Мускавра сутаҫҫӗ. Вӗсене сутакан савӑт адрӗсӗ ҫапла: „Москва, 71, Б. Калужская ул., 2-й Донской переулок, Гос. протезный завод им. Семашко". Харӑкаври отоларингологи институтӗнче (Чернышев пер., 11) трубка—резонатӑр тенине сутаҫҫӗ. Патӑрйел райҫутпай пуҫлӑхӗн хӑлхи педтехникум студенчӗсем ыйтса каланине илтми пулса, педтехникум вал̧ҫи чӑваш чӗлхине вӗренме преподавател йаман, ҫавӑнпа студентсем чӗрӗк ҫулталӑк вӗренсе пӗтерсе те чӑваш чӗлхипе пӗр урок та вӗренсе курман. Райҫутпай пуҫлӑхне итлеттермели аппарат шырама Мускаври савӑтах йе Харӑкаври институтах каймала мар. Шупашкарти Ҫутӗҫ Комиссариачӗн аппарачех итлеттерме пултарать ӑна.

## Ҫӗнӗ Конституци хыҫҫӑн



— Пӗр суйлавҫӑ жалӑбӑ панӑ та... Жалӑбине тӗрӗслеме кӑнтӑрла килме, ытти ӗҫсем нумай пулнӑ пирки, вӑхӑт тупаймарӑм.
— Ҫавӑншӑнах ҫӗрлене пӑхмасӑрах тухрӑн-и? Ырана хӑвармалаччӗ.
— Ырана? Ырана хӑварсан вӑл гражданин ҫитес суйлавра маншӑн сасӑ парас ҫук.

# Йăмралă çырма вĕçĕнчи çăл

Йалсовет председателĕ Орешкин, çав тери пысăк ĕçсемпе кĕрешсе нумайччен ларса ывăннăскер, портфелĕнчен пас пӳрне пысăкĕш пирус кăларса чĕртсе йачĕ те пусма вĕçне тухса тăчĕ. Пирус тĕтĕмне вĕрсе кăларнă майăн каçхи таса та уçă сывлăша кăкăр тулли антăхса çăтма тытăнчĕ.

Тӳпери çăлтăрсем Орешкин çине пăхса куçĕсене мăч-мăч выљатаççĕ. Çуллă çатма икерчийĕ пек тулса çитнĕ уйăх ватă йăмрасен хӳттипе çӳлеле тапаланаť. Çарала пуçланă йăмрасем йулашки çулçисене те пулин тăкмасăр хăварасшăн ним хускалмасăр лараççĕ. Çангалăк шăп тăраť те, анчах шăплăха пăсакансем нумай çав йал хушшинче. Акă йалсовечĕ çумĕнчен çăл кутĕнче шыв ăсасшăн тăракан хĕрарăмсем шалтах ывăнса çитнĕ — çăл тарасине пĕр канăç памасăр чĕриклеттереççĕ, витрисене ханкăртаттараççĕ, пĕр-пĕринпе йӳçĕ сăмахсемпе вăрçаççĕ.

— Тфу! Мĕнле йал ку,— тет председателĕ йантракансене тарăхса, — ара, çĕр айĕнчен йухса тухакан шыва та вĕсем пĕр-пĕринчен вăрттăн ăсаççĕ.

Такам та йатлаçмала çав чăнах та. Тем тăваççĕ çав нумай-шывпала. Çăлри шыва, тăмĕ-хăйăрĕпе хырса ăсса пĕтереççĕ. Кĕсел пĕçереççĕ тейĕн çав шывпа. Шыв çитмен пирки вара, чейереххисем, ыттисем çывăрнă вăхăтра, çур çĕр тĕлĕнче çăл кутне йăпшăнса тухаççĕ. Çавăн пеккисен ушкăнĕ кĕпĕртетет ĕнтĕ çăл кутĕнче.

— Е-ей, мĕскер мĕшĕлтетен. Хăвăртрах аппалан, çынсем нумай пухăначчен ăсса кайас пирĕн те,—чанкаť Марйе сасси.

— Ан кăшкăрсам! Сире вађђи шыв йулмарĕ. Куран, çур витре тăм хырăнса тухрĕ,—ответлет ăна хирĕç тепри.

— Ех! Çурçĕрте тухса та шывсăр йултăмăр...

— Кӳлĕ патĕнчи çăлта пухăнчĕ-ши пăртак?

— Атăр-ха çавăнта!

Пуш витре çĕкленĕ хĕрарăмсем кӳлĕ йенеле çул тытаççĕ. Анчах хăйсене хирĕç килекен тепĕр хĕрарăмĕ каллех чарса тăратаť.

— Унта ан та кайăр. Епĕ те тăмлă шыв çеç тултарса килетĕп.

— Апла пулсан „урлă урама“ каймала пулĕ пĕр тухнăскер.

— Ну, шăпрах хăтланăр вара есĕр, „урлă урам“ çыннисем сисĕен темтепĕр каласа вăрçса пĕтерĕç...

Хĕрарăмсем шавласа иртсе кайнă хыççăн, лăхлăх-лăх кулса йачĕ председателĕ.

Интереснă, вăрăсем пекех çӳреççĕ...

Çак вăхăтра çырмара темскер тĕпĕртетни, пуçри шухăшсене салатса, ăна çавăнтала пăхтарчĕ.

Паçăр хĕрарăмсем кĕпĕртетекен çăл патĕнчен пĕр çирĕм чалăш анатарах тепĕр йурăхсăра тухнă çăл шăтăкĕ пур. Унăн çӳлти пурисем çĕрсе кайса айалала йăтăнса анса пĕтнĕ. Çавăнпа çав çăлăн çара шăтăкĕ кунĕн-çĕрĕн тăлăххăн, пĕлĕт çине пăхса куђанса вырťаť. (Хăйне ним вырăнне хумасăр, пĕчĕк ачасем чулсем, кайăк виллисем пыра-пыра йарса такама та çителĕклĕ таран тăрантма пултаракан шывне пăрахăçа кăларнишĕн куђанаť вăл). Çак çăл патĕнче икĕ пĕр пек шурă качака путеккисем выђаса çӳреççĕ. Вĕсем çырма хĕрне хаваслăн чупса улăхса кайаççĕ те кутăн çавăрăнса çăл шăтăкĕ патнеле тăрстин, тăрстин сиксе анса, урлăн чалт çеç сиксе каçаççĕ. Сиксе каçнă хыççăн савăннипе: мекек! тесе хаваслăн çухăрса йараççĕ. Унтан каллех тепре сикме çырма хĕррине вĕçтерсе улăхаççĕ.

— Еккей, чарусăр чунсем,—тет Орешкин, качака путекĕсем çине хытса кайсах пăхса,—çавсем те йĕркелĕн выђама пĕлеççĕ те... Ай, пĕрин те пулин асăрхаймасăр çăл тĕпнеле пĕтĕрĕнсе анас! Вара харсăр чĕрелĕ хуçи вĕренĕççĕ çĕр хута качакасене кăларса йама.

Качака путекĕсем председателĕ сăмахне ăнланнă пекех: „мекек“ те „мекек“ терĕç те çырма тăрăх çавра çил пек çĕмĕрсе анса карĕç. Вĕсене часах çăла сиктереймĕн çав...

* * *

Таçтан тупса кăштах сыпкаланă Иван пичче пайан. Йĕпе çине сапа тенĕ пек каç пулсан тата Микулай хăги патне ĕçке кайма тухнă. Пысăк Чăрăш йалне[1] тĕксĕм хура кĕр каçĕ хупласа тăраť. Пĕри-пĕри аллине хăрăмласа питрен çупса кайсан та палласа йулайрас çук. Тепĕр çĕре пулсан кайма та хăрамала. Анчах Микулай патне çул тӳрĕ, урам урлă çеç каçмала. Иван пичче, куçне çыхса йарсан та унта çитме пултараť. Веçĕ унăн пӳрт тулли хăнасене çутатакан лампийĕ кантăк витĕр прожектăр пек çутатаť. Иван пичче çав çутăна тĕллерĕ те тӳрех, сукмака-мĕне пăхмасăр йарăнтарчĕ. Утнă майăн ĕлĕк сал акран вĕренсе таврăннă „Александровски централ“ йатлă йуррине чĕтрентерсе тăсса йачĕ.

Сасартăк теменле шăтăка вĕçсе анса кайрĕ те, сивĕ шыва чул пек шампăртатса путма тытăнчĕ...

— Хура-а-ах!... Кравул!..

Йураť, телейе пула, Микулайăн тула тухнă хăнисем çак хăрушă сасăна çийĕнчех илтрĕç.

Пĕтĕм пӳртри халăх урама кĕрлесе тухрĕ. Сасă çĕр тĕпĕнчен тухнине илтсен пĕр вăхăтра пĕтĕм халăхăн сехри хăпса тухрĕ.

— Пĕ-ĕтрĕмĕр!... Çĕр тĕпĕнчен сасă илтĕнет!...

— Е, çăлра тем? Пурасăр çăлра!...

Пурте пурасăр çăл шăтăкĕ патне вĕçтереççĕ. Спичкăпа çутса пăхаççĕ—çăлра етем тапаланаť. Тĕттĕм пирки ним тума аптăраççĕ. Йалсовет председателĕ те çĕмĕрен пек сиксе тухаť çав сасса илтсе. Мĕн пулнине пĕлсенех, хăйне-хăй асăрхамасăр çӳренĕшĕн йатлама тытăнаť Иван пиччене.

Сире йалсоветне суйласа лартнă чух çăлсене тӳрлетмешкĕн йăвăçсем тупса пама, йалсовечĕпе çĕнĕрен пилĕк çăл чавтарма наказ парса хăварнине манса кайнине ма каламастăн?

— Çăлсем йусама, кĕперсем тума уйăрса хунă самообложени укçисем ăçта вырттаççĕ сирĕн, е?

— Тăхтăр-ха, тăхтăр, малтан пĕрине туртса кăларар! Акă вĕрен йатăмăр, килĕр туртма!—кăшкăрчĕ пĕри аслăраххи.

---

[1] Çĕрпӳ районĕ.

Иван пиччене сĕтĕрсе кăларма тапратрĕç Анчах, вĕрене аллипе çеç тытнăскер, ывăнса çитрĕ пулас, самăй тухма патне çитнĕскер талса анса карĕ. Вĕрен туртакан пĕтĕм халăх кутăн кайса пĕр-пĕрин çине купаланса ÿкрĕç.

— Ну, пĕтрĕ!..

— Вилчĕ!—хăранипе кăшкăрса йачĕç пурте харăссăн. Пĕр-икĕ минут хушши çăлра ним сасă та илтĕнмерĕ. Унтан каллех сасă илтĕнчĕ.

Пÿртрен лампă илсе тухрĕç. Айала анса, лайăх çыхмасăр шăнса хытнă çынна кăларма май килменнине тавçăрса илсе, йалпора ĕçлекен Тихăнăв хăйне вĕренпе çыхса антарма хушрĕ.

Çапла вара Тихăнăв хăравçăсăррине пула çеç вилме патне çитнĕ çынна çăлса хăварма пултарчĕç.

Çак вăхăтра председателĕн чĕри хăранипе тухса тарас вĕçнех çитрĕ пулас. Пуçри çĕлĕкĕ çÿлеле çĕкленчĕ, теççĕ хăш-пĕрисем. Анчах вăл çав инкек иртсенех çăлсем çинчен часах манса кайрĕ. Шывсăр аптăраса çитнĕ халăх каллех пĕр пĕринчен ăмăртмала çăл тĕпне хыраť.

П.

# Хыпарсем

**Çĕрпÿве кайма тухнă.** Енĕшкассинчи „Хĕрлĕ етновец" колхозра Çĕрпÿ МТС молотилки августăн 8-мĕш кунĕренпе лараť. Машин Çĕрпÿве кайма тухнă, пĕр километăр кайнă та, уйрах чарăнса ларнă, трактăрĕ пăрахсах тарнă. (Вас Иваншков).

**Шăршă.** Трак районĕнчи „Правда" колхоз лаша вити умĕнче 27 уйăх хушши купаласа пынă, уйа тăкма маннă навус шăрши кĕрет. Çав шăршлă тĕтрелĕхре Васиĺйĕв Ф. тата ытти коњухсем кахал шăршийĕ те пăсланаť. (К. М. Пăчăр).

**Шурча йалсовечĕн** (Ишлей р.) картишне сыснасем çĕмĕрсе кĕрсе, паранкине кăларса çисе йанă. Йалсовет ваљђи пĕр паранкă та хăварман. Сыснасене кушăн йалсовет ответ тыттарма шутламасť, мĕншĕн тесен сыснасем кăларса çимен пулсан, çав паранкăсем ахалех, пĕр усăсăрах пĕтетчĕç, тет. (Нан).

**Иансакассинчи** (Çĕрпÿ р.) „Ленин çулĕпе" колхозра çтена хаçачĕ пĕрене айне пулнă та, пилĕк уйăх хушшинче никам та кăларман. Çав колхозрах чирлĕ плугсене усă сывлăшра сыватма шут тытнă, молотилкăна „йур" йатлă çупала сĕрсе çемçетес тенĕ. (А. Йарков).

**400 пăт нимĕр тунă.** Тимĕрчкассинчи (Шăхасан р.) „Хĕрлĕ шевле" колхозри пуçлăхсем. Нимĕрне, паранкă тесе, колхозниксене ĕçкунĕсем тăрăх валеçесшĕн. (Никăн Йанчеш).

**Карас пулă.** Трак районĕнчи Çĕнйалпа Кÿлçырма колхозĕн карас кÿллисене метăр çуршар лапра тулса ларнă. Пулăсем: пылчăк ăшне путса виличчен тухса тарас пулĕ урăх çĕре, тесе шухăшлаки сисĕнет. Пĕлекенсем каланă тăрăх, карассем хăйсен районĕнчи Ишек колхоз кÿллине куçма шухăшлаççĕ. Унти таса кÿлĕре пурăнма аван, тесе калаççĕ, тет. (С. И.)

### Хастар ача

— Микуç, мĕншĕн есĕ тăван аçу каланă сăмахсене итлеместĕн?

— Итлетĕпçке, атте!

— Итлетĕн пулсан, ĕнер панă 3 тенкĕпе мĕншĕн ерех илмерĕн.

— Географипе грамматикă кĕнекисене илтĕм, атте!

— Пайан ерех илме панă 3 тенкĕне ăçта чикрĕн?

— Хам ваљђи математикă кĕнеки, сана ваљђи букварь илтĕм, атте!

— Апла пулсан пар мана букварне, терĕ ашшĕ ачинчен вăтанса.

С Т.

# Ачипе мучĕшĕ



— Ачам, кала-ха, сан шухăшупа пионер тесе кама калаççĕ?

— Пионер тесе çитĕнсен ÿлĕм Совет Сойузĕн геройĕ пулас çынна калаççĕ, мучи!

# „Ресторан“

Епӗ урама тухсанах мана йулташӑм тӗл пулчӗ.

— Сывӑ-ха,— тетӗп,— пурӑнкалатӑп хуллен.

— Лайӑх сывӑ пурӑннӑ чухне аҫа-ха еппин ресторана кайса кӑшт сыпкалар,— тет.

— Фу-у, ресторан?! — Ӗҫесшӗнех хулана 7 ҫухрӑма кайсах ҫӳреймӗн, ҫитменнине тата еп ерехне ӗҫместӗп,— терӗм йулташа.

— Мӗн? — терӗ мана йулташ,— мӗн хула ҫинчен калаҫатӑн ҫак ес? Ресторан хуласенче ҫеҫ пулаҫ-и? Ес нимӗн те пӗлместӗн иккен, ресторан хаҫ хамӑр йалтах пур вӗт-ха,—терӗ.

Еп „хамӑр йалта ресторан пур“ тенине илтсен тӗлӗнсех карӑм. Пайан кунччен илтменччӗ епӗ ӑна.

— Мӗнле хамӑр йалтах? Пирӗн колхоз ресторан уҫнӑ-и вара? — ыйтатӑп йулташран.

— Ҫу-ук,— тет мана вӑл,— колхоз мар. Аҫа ман хыҫҫӑн, ҫитсен хӑвах пӗлӗн кам уҫнине.

Ҫук, пымастӑп,— тетӗп,— еп ерех ӗҫменнине ес ху та аван пӗлетӗн вӗт-ха.

Аҫа-а,— тархаслаҫ мана йулташ.— Кӑшт ӗҫнӗшӗн мӗн пулаҫ-ха. Ӗҫмесен те пырса кур.

Тархасласан, тархасласан, хам ерех ӗҫместӗп пулсан та, мӗнле ресторанне кайса курма килӗшрӗм. Еп ресторана пыма килӗшнӗшӗн ман йулташ шутсӑрах хӗпӗртерӗ. Урам тӑрӑх анатала утрӑмӑр. Йулташ малта утаҫ, епӗ — ун хыҫҫӑн пыратӑп.

— Хӑш ресторанне кайӑпӑр-ха? — ыйтаҫ манран хамӑн йулташ.

— Миҫе ресторан вара пирӗн йалта? — ыйтрӑм епӗ.

— Ресторансем чылай пирӗн йалта,— ответлет вӑл мана,— иккӗ,— виҫҫӗ те пур, тахӑшне кайатпӑр-ха вӑт?

— Ес хӑшне кайас тетӗн, еп ҫавӑнта пыратӑп, тетӗп,— май килсен пурне те ҫитсе курӑпӑр.

Хамӑр урам тӑрӑх йанкӑшатпӑр, йал вӗҫне тухасси те инҫех йулмарӗ.

— Ак ҫитрӗмӗр,— терӗ йал вӗҫне ҫитерехпе,— кӗретпӗр ӗнтӗ ҫакӑнта.

Вывӗскӑ мӗнӗ нимӗн те курӑнмасҫ, нихӑш кӗтессине те „Ресторан“ тесе ҫырса ҫапман. Ҫапах та „ресторан“ тесех кӗтӗмӗр. Пӳртре виҫ-тӑват ҫамрӑк сӗтел хушшинче лараҫҫӗ, хӑйсем пурте ӳсӗр. Сӗтел ҫинче ерех кӗленчисем лараҫҫӗ.

— Мана та пӗр ҫур литӑр пар-ха,— ыйтаҫ манӑн йулташ,— мӗн чухлӗ тӑраҫ-ха ҫур литр?

— Сакӑр тенкӗ,— ответлерӗ „буфетчицӑ“ сарӑрах, пӗчӗкрех хӗрарӑм.

— Ма ытла та хаклӑ? — ыйтатӑп хӗрарӑмран,— лавкасенче ҫур литр 6 тенкӗ ҫеҫ тӑраҫ, а сирӗн 8 тенкӗ.

— 6 тенке сутсан мӗн усси пултӑр-ха пире,— ответлерӗ хайхи хӗрарӑм,— укҫапа укҫа улӑштарни интереснӑ мар пире. Хаклӑ теттӗр пулсан, ан илӗр еппин, вӑйпа сутмастпӑр, илекенсем сирӗнсӗрех нумай пирӗн.

— Аҫа,— тетӗп йулташа,— кунта ытла хаклӑ, тепӗр ресторан пур тетӗн, унта кайса пӑхӑпӑр.

Манӑн йулташ епӗ каланине итлерӗ, укҫине хӑпал-хапӑл кӑсйине персе чикрӗ те, ерех илмесӗрех тухса утрӑмӑр. Тепӗр ресторана кайатпӑр ӗнтӗ.

Кӑшт тӑварах хӑпарсан тепӗр ресторанне ҫитрӗмӗр. Кунта та ерех илме пынӑ ӳсӗр ҫынсем нумай.

— Мана ҫур литӑр пар-ха!

— Мана литӑр! — ыйтаҫҫӗ ерехшӗн антӑхакан ҫынсем.

— Хакӗ мӗнле?

— Ҫур литӑрӗ 8 тенкӗ, хаклӑ мар,— ответлет каҫӑртарах сӑмсалӑ хура, лутра хӗр.

— Кунта та хаклӑ-ҫке,— тетӗп йулташа.

— Ресторансенче унтан йӳне тупас ҫук ӗнтӗ,— терӗ те, манӑн йулташ ҫур литӑр ерехе 8 тенкӗ парса илчӗ.

— Вӑт укҫа мурӗсем,— кӗҫтемен пуҫах хыҫҫа кӑтартаттарса илтӗм,— кунне мӗн чухлӗ укҫа илесҫӗ ши?

Йулташсем, тен сирӗн вӑл ресторан хуҫисене пӗлес килет пулӗ. Паллаштарсан йураҫ. Епӗр ҫитсе курнӑ „ресторан“ хуҫисем пурте Чурпай йалӗнчи (Йетӗрне р.) Кирӑв йачӗпе тӑракан колхоз членӗсем. Пӗри Аниҫимӑвӑ Софи, тепӗри Тимофейӗвӑ Олҫӑ. Тимофейӗвӑ Олҫӑ колхозра питех ӗҫлесшӗн те мар. Ерехпе сутӑ тусах пурӑнасшӑн. Кӑҫал вӑл ҫу каҫипе пурӗ те 41 ӗҫкунӗ тунӑ, унтан та улма кӑлармa кайманшӑн 2 ӗҫкунне чакарнӑ, хаҫ ӗнтӗ 39 ӗҫкунӗ ҫеҫ йулнӑ. Ҫав хушӑрах ун йулташӗсем 120—130-шар ӗҫкунӗ тунӑ; ун амаҫури амӑшӗ ватӑскерех, сывлӑхӗ начар пулин те, 47 ӗҫкунӗ тунӑ. Олҫӑн колхозра ӗҫлеме вӑхӑт ҫук ҫав, ерех лавкине ерех илме каймала, киле килсен сутмала, ӗҫ нумай. Ҫавӑнпа та вӑл бригадир ӗҫ патне пырса каласан:

— Килте ӗҫ пур, йерҫместӗп,— тет. Хӑш чухне тата апла та мар, бригадирсене тем те каласа вӑрҫаҫ. Пӗркун хам куҫпах куртӑм,— бригадир ӗҫ патне, ҫӗрулми кӑлармa пырса каласан:

— Кирлӗ мар мана сирӗн паранку, кайӑр та кӑларӑр, еп паранкӑсӑрах пурӑнма пултаратӑп,— терӗ те, те ерех лавкине, те урӑх ҫӗре, вӗҫтерчӗ анчах, курса та йулаймарӑмӑр.

Ҫапла епӗр Тимофейӗвӑпа Аниҫимӑвӑ „ресторанӗсеве“ ҫитсе куркаларӑмӑр. Кирлӗ мар пире ун пек „ресторансем,“ урӑх ура та йарса пусмастӑп вӑл „ресторана.“ Малашне районти прокурорсемпе милицисем ҫитсе курччӗр тата вӑл ресторансене.

**Дангер.**

## Хӑйне кирлӗ пек ӑнланакан

— Ма есӗ, ывӑлӑм, шкултан таварӑнсассӑн пӑртак та пулин вӗренместӗн.

— „1936—37-мӗш вӗренӳ ҫулӗнче пӗр ача та пӗр класрах икӗ ҫул ларканни пулмала мар“ тесе ҫырнӑччӗ хаҫатра. Ҫавӑнпа та вӗренсен вӗренмесен те, пурӗпӗрех малали класа куҫарӗҫ, тетӗп.

**И. Тихӑнӑв.**

# Вулакансен жалăбисем

## Капкăн тус!

*Колдогăвăр тăрăх Чăвашсен академилĕ театăрĕнчи артиссем сценă çине хăйсен тумтирĕпе тухнăшăн амортизаци укçи илмеле. Çав илме тивĕçлĕ укçана пирĕн директăр хăйĕн арăмне (артистка) тата местком председателĕпе комсомол организатăрĕ пулса ĕçлекен Молодăв артиса 2 çулшăн тӳленĕ, ыттисене „укça çук" тесе пĕр пус та паман.*

*Çав укçана илесех пулсан манăн местком председателне суйланмала-ши йе директăрăн... арăмĕ пекех сывăх çынни пулмала-ши?*

**Артист.**

## Хисеплĕ Капкăн!

*Есĕ манман пулĕ-ха, хисеплĕ „Капкăн", пирĕн Трак районĕ уçăлни 2 çул тултарас патне çитнине. Анчах районра пайан кун та физкультурă райсовечĕ, турăсăрсен райсовечĕ, тата Осоавиахим райсовечĕ те çук.*

*Сан шутпа мĕнле, хисеплĕ „Капкăн" кун пек района районланса çитмен район, тесе каламала мар-ши?*

**Сӳп. Ил.**

## Капкăн йулташ!

*Есĕр „Капкăн" журналăн 4-мĕш номĕрĕнче „ĕлĕк пуччушши çине утланса уйăх патне хăпарса çӳренĕ" карчăксем халĕ Шупашкар пасарĕнче сарлака сак çине утланса ларса хапрăк çĕприпе услам тăваççĕ" тенĕччĕ.*

*Çапла çырни тухнă хыççăн, çĕпрепе услам тăвакан карчăксем Шупашкар пасарĕнче курăнми пулчĕç.*

*Халĕ килте чуста лартас пулсан, çĕпре нисçта та тупса илме çук. Шупашкарти суту-илӳ организацисем аслă праçниксем умĕн çеç çĕпре сутаççĕ.*

*Çĕпресĕр манăн мĕнпе чуста лартас? Çĕпре илме Хусана командировка кайас-ши? Кайассине кайаттăм, анчах 20 пуслăх çĕпре илесшĕнех мана упăшка Хусана „командировка" йарас çук. Хусанта çĕпре пит нумай, тет. Унта нумай пулсан та, кунта кирлĕ таран кӳрсе памаççĕ. Çĕпре хаклă йапала мар, унпа тавар оборотне нумайах ӳстереймĕн, теççĕ-ши? Манăн апла каланине хирĕç: „санăн пуçунта миме вырăнне, çĕпре пулмала", тес килет.*

**Килхуçи арăмĕ.**

## Капкăн учителĕм!

*Таçта епĕ вуланăччĕ: пĕр чăваш „Капкăн" журнала вуласа курман çынна кăнтăрлах хунар çутса шыранă, тет. Шыранă çынна тупнăши вăл, çук-ши? Тупайман пулсан кунта килсе куртăр. Кунта „Капкăн" журнал мар, букварь вуласа курманнисем те пур (вĕсене хут вĕрентес тĕлĕшпе йалсовет çителĕксĕр ĕçлет). Килессе çак адрĕспа килтĕр: ТАССР, Павлă районĕ, Усăллă йалĕ.*

**Р. Мурзаков.**

---

# Çăмăлттай

**(Кулăшла йурă)**

Çĕнĕ уйăх — кукăр çурла,
  Хытăрах çутат:
Сăрт хĕррипе йурла-йурла
  Тимуçça утат.
Кăтра çӳçме сар çу сĕрсе
  Лартăм турама.
Ан тиркĕрсем, сарă хĕрсем,
  Çӳçĕм хура ман.
Сар хĕр патне кайма тесе
  Тухрăм урама.
Чăлтăр-чăлтăр йур сирпĕтсе
  Чăсрăм урама.
Урара ман çĕнĕ пушмак,
  Çап-çутă калуш:
Кăçат тăхăнмашкăн хушмасть
  Сарă хĕр Ануш.
Пуç çинче ман чалăш ларать
  Çут сăмса картус;
Çĕлĕк тăхăнма та чарать
  Чунăм савнă тус.
Сар хĕр мана йĕкĕлтесе,
  Хăйне кура мар,
Йуратап, тет, хура тĕсе,
  Пĕл, тет, йурама.
Костюм хура, пальто хура —
  Халь саватех уш.
Шĕшлĕ аври — сар Йакура! —
  Манăн халь Ануш.
Çĕнĕ уйăх — кукăр çурла
  Анчĕ сăрт хыçне.
Хăй Тимуçça йурла-йурлах
  Чăмрĕ йур ăшне.
Таçта çĕтрĕ çутă калуш,
  Пальто шап-шурах.
Пӳрт çумĕнче сар хĕр Ануш
  Саватъ Йакурах.

**КАЛКАН.**

---

**Секретарь и вып. редактор *И. ИЛЛАРИОНОВ.*** **За ответ. редактора *Ф. АЛЕКСАНДРОВ.***

Сдано в производство 21/XI—36 г. Подписано к печати 28/XII—36 г. Уполномоч. Чувашглавлита № 881. Заказ № 1955.

Формат бумаги 58×88¹/₈ Объем 2, 5 п. л. Гор. Чебоксары, тип. № 1 Чувашгиза. Тираж 4900. Изд.-газ. «Канаш»




Борис Йефимăв ӳкерчĕкĕ. „Известия" хаçатран.

**Справкă**